Библиотека им. М. Горького №

ПĔТĔМ ТĔНЧЕРИ ПРОЛЕТАРИСЕМ, ПĔРЛĔШĔР!

КОММУНИЗМ ЯЛАВĔ

Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Чăваш обкомĕпе Шупашкар хула комитечĕн тата Чăваш АССР Верховнăй Совечĕпе Шупашкар хула Совечĕн хаçачĕ

1953 çул Апрель 1 юнкун № 67 (8976)

36-мĕш çул тухать. Хакĕ 20 пус.

СССР Министрĕсен Совечĕпе Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕ апат-çимĕçпе промышленность таварĕсен ваккăн сутмалли государственнăй хакĕсене çĕнĕрен йÿнетмелле турĕç.

Халăх пурнăçне лайăхлатассишĕн ывăнма пĕлмесĕр тăрăшнăшăн Коммунистсен партийĕпе Совет правительствине пĕтĕм совет халăхĕ тав тăвать.

Халăх пурнăçне лайăхлатассишĕн сталинла тăрăшни

Мĕнпур ĕçсыннисен юратнă çулпуçĕ И. В. Сталин юлташ Аслă Отечественнăй вăрçă пĕтнĕ хыççăнах, 1946 çулхи февралĕн 9-мĕшĕнче, Мускав хулинчи Сталински суйлав округĕнчи суйлавçăсем умĕнче: «Куллен кирлĕ таварсем туса кăларас ĕç çине, пур таварсен хакĕсене те тăтăшах чакарса пырса, ĕçсыннисен пурнăç условийĕсене лайăхлатасси çине... уйрăмах тимлĕн пăхмалла пулать», тенĕ.

Аслă Сталинăн çак кăтартăвĕ тăрăх Совет правительствипе партин Центральнăй Комитечĕ вăрçă хыççăнхи çулсенче халăха кирлĕ таварсен хакĕсене çултан-çул йÿнетсе пычĕç. Таварсене ваккăн сутмалли государственнăй хаксене 1947—1952 çулсем хушшинче пилĕк хутчен йÿнетрĕç. Çавна пула рабочисемпе служащисен реальнăй ĕç укçийĕ тата хресченсен тупăшĕ чылай ÿсрĕ.

Иртнĕ çулта промышленноçпа ялхуçалăх производстви çитĕнÿсем тунă май, ĕç тухăçлăхне ÿстернĕ тата продукцин хăйне ларакан хакне татах та йÿнетнĕ май, Совет правительствипе КПСС Центральнăй Комитечĕ 1953 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа пурне те куллен кирлĕ апат-çимĕçпе промышленность таварĕсен ваккăн сутмалли государственнăй хакĕсене çĕнĕрен—черечĕпе шутласан, ултăмĕш хут—йÿнетме йышăнчĕç.

Ку постановлени паян пирĕн хаçатра пичетленет. Унта кăçалхи апрелĕн 1-мĕшĕнчен нумай йышши таварсен ваккăн сутмалли хакĕсене йÿнетни çинчен каланă. 1952 çулта апат-çимĕç таварĕсен тата кĕнекесен ваккăн сутмалли государственнăй хакĕсене йÿнетнĕ пулсан, кăçал апат-çимĕçпе промышленность таварĕсен хакĕсене те йÿнетнĕ. Çакна май колхозçа кооперации суту-илĕвĕ енĕпе те таварсен хакĕсем йÿнелĕç. Çапла вара совет укçи тата ытларах тĕрекленет, рабочисемпе служащисен реальнăй ĕç укçи чылай ÿсет, колхоз хресченĕсем чылай тупăш курассĕ. Таварсен хакĕсене йÿнетнинчен пирĕн халăха пысăк усă пулать. Таварсен хакĕсене чылай йÿнетнипе кашни совет çемйин пурнăçĕ сисĕнмеллех лайăхланать.

Партипе правительство апат-çимĕçпе промышленность таварĕсен хакĕсене йÿнетесси çинчен йышăннă постановление пĕтĕм совет халăхĕпе пĕрле пирĕн республикăри ĕçсыннисем те пысăк хаваслăхпа кĕтсе илчĕç, вĕсем Коммунистсен партийĕпе Совет правительствине ĕçсыннисен пурнăçне лайăхлатассишĕн яланах тăрăшнăшăн пĕтĕм чун-чĕререн тав тăвассĕ. Вĕсем хăйсене шанса панă участоксенче пĕтĕм вăя хурса ĕçлеме, социализмла Тăван çĕршыва чечеклентерессишĕн, унăн хăватне ÿстерессишĕн тата тимлĕрех тăрăшма сăмах параççĕ.

Пирĕн халăх çакна лайăх пĕлсе тăрать: Ленин—Сталин партийĕпе Совет правительствин халăх интересĕсемсĕр пусне урăх интерессем çук. Вĕсем совет çыннисене партин XIX-мĕш съезчĕн историллĕ решенийĕсене, сталинла пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх плана, коммунизм строительствин пысăк та чаплă программине пурнăça кĕртме организацилеççĕ, халăх пурнăçне лайăхлатас политика тытса пыраççĕ. Çав политикăна Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă классикла произведенийĕнче тĕплĕн сутатса панă. Ку произведени теорипе практика тĕлĕшĕнчен питех те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Унта Сталин юлташ социализмăн экономикăлла законĕсен характерĕпе вăйне уçса палăртнă.

«Социализмăн экономикăлла законĕн чи паллă уйрăмлăхĕсемпе вăл хушнисене,— тенĕ И. В. Сталин юлташ,— çакăн пекрех каласа пама пулнă пулĕччĕ: социализмла производствăна çÿлте тăракан техника никĕсĕ çинче вĕçĕмсĕр ÿстерсе тата лайăхлатса пырса, пĕтĕм обществăн пĕрмаях ÿссе пыракан материальнăй тата культурăллă ыйтăвĕсене чи туллин тивĕçтерсе пырасси».

Пирĕн çĕршыв экономики çак тĕп закон тăрăх аталанса пынипе халăх хуçалăхĕн пур отраслĕсем те çултан-çул нумайрах та нумайрах продукци туса кăлараççĕ. Çакă вара халăх пурнăçне çултан-çул лайăхлатса пыма май парать.

Пурнăç лайăхланса пыни халĕ пирĕн ĕçсыннисем тĕрлĕ таварсем вăрçăччен хинчен нумайрах туянниччен питех те уççăн курăнса тăрать. Çĕрпÿ районĕнчи магазинсемпе ларексем кăçалхи январьпе февраль уйăхĕсенче, иртнĕ çулхи çав вăхăтрипе танлаштарсан, ĕçсыннисене çĕр пин тенкĕлĕх ытларах тавар сутнă. Ĕçсыннисем паха йышши хаклă таварсем: пурçăнпа çăм пир-авăр, çĕвĕ çĕлемелли машинăсем, велосипедсем, мотоциклетсем, фотоаппаратсем, сехетсем тата ытти çавăн пек таварсем ытларах туянаççĕ. Таварсен хакĕсене çĕнĕрен йÿнетнĕ май ĕçсыннисем хăйсене кирлĕ таварсене тата нумайрах туянма пултараççĕ.

Таварсен хакне йÿнетнинче партипе правительство ĕçсыннисен пурнăçне лайăхлатма Сталин юлташ вĕрентнĕ пек тăрăшни яр-уççăн курăнса тăрать. Партипе правительство халăх ырлăхĕшĕн малашне те хытă тăрăшĕç. Кун çинчен Г. М. Маленков юлташ партин XIX-мĕш съездĕнче тунă отчетлă докладра та, аслă Сталина юлашки çула ăсатнă чухне хурлăхлă митингра тата СССР Верховнăй Совечĕн тăваттăмĕш сессийĕнче каланă сăмахсенче те каларĕ.

Шалти политика тĕлĕшпе, — тет Г. М. Маленков юлташ,—пирĕн тĕп ĕç—рабочисен, колхозниксен, интеллигенцин, мĕнпур совет çыннисен материальнăй пурнăçне пĕрмаях лайăхлатса пырасси пулать. Халăх ырлăхĕшĕн, унăн материальнăй тата культура ыйтăвĕсене чи туллин тивĕçтерсе пырассишĕн тимлĕн тăрăшасси пирĕн партипе правительствăшăн закон пулса тăрать.

Шăпах та çак тĕллеве пурнăçлас шутпа пирĕн çĕршывра мĕнпур халăх хуçалăхне малалла вăйлăн эталантарса пыраççĕ. Промышленноçпа ялхуçалăх производствисем çултан-çул ÿсеççĕ. Пурне те куллен кирлĕ продукцие ытларах та ытларах туса кăларни совет суту-илĕвне анлă сарма май парĕ.

Совет суту-илĕвĕ хамăрăн тăван тата питĕ кирлĕ ĕç пулса тăрать. «Пирĕн задача совет суту-илĕвне малашне тата ытларах сарса ярассинче, çак ĕçе вырăнти промышленноçа хутшăнтарассинче, колхозла-хресченле суту-илĕве вăйлатассинче, çапла вара, совет суту-илĕвне вăйлатас енĕпе çĕнĕрен татăклă çĕнтерÿсем тăвассинче пулать», тесе вĕрентнĕ И. В. Сталин.

Партипе совет организацийĕсем Сталин юлташ совет суту-илĕвĕ пирки вĕрентсе каланине, партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсенче çырса хунисене пурнăça кĕртессишĕн тимлĕн тăрăшма тивĕçлĕ. Çакă вара вĕсене суту-илÿ организацийĕсене ертсе пырас ĕçе вăйлатма хушать. Суту-илÿ организацийĕсенче государство дисциплинине çирĕплетмелле. Кашни суту-илÿ работникĕ хăйне шанса панă ĕçшĕн пĕтĕм ответлăха туйтăр. Таварсене ĕçсыннисем патне вăхăтра çитермелле, таварсен ассортиментне пысăклатмалла, тавар çаврăнăшне вырăнти промышленность туса кăларакан таварсене нумайрах хутшăнтармалла, суту-илĕве культурăллă туса пымалла. Столовăйсемпе чайнăйсенче те кирлĕ пек йĕрке пултăр.

Нумай пулмасть пирĕн хаçатра Елчĕк районĕнчи потребительсен кооперацийĕн работникĕсем 1953 çулта суту-илÿ планне срокчен тултарас тĕлĕшпе илнĕ социализмла обязательствăсем пичетленсе тухрĕç. Ку районти потребительсен кооперацийĕнче ĕçлекенсем ваккăн тăвакан суту-илÿри тавар çаврăнăшĕн планне 1953 çулхи декабрĕн 21-мĕшĕ тĕлне тултарма тата планран ирттерсе халăха 350 пин тенкĕлĕх тавар сутма сăмах пачĕç. Вĕсем 1953 çулта укçа-тенкĕ пухмалли плана 110 процент тултарассишĕн тата 374 пин тенкĕ услам илессишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ.

Совет правительствипе партин Центральнăй Комитечĕ таварсен хакĕсене çĕнĕрен йÿнетесси çинчен йышăннă постановлени совет халăхне сталинла пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх плана тултарассишĕн пыракан социализмла ăмăртăва тата анлăрах сарма хавхалантарĕ. Ĕçсыннисем, Ленин—Сталин партийĕ ертсе пынипе, коммунизм строительствинче çĕнĕ те çĕнĕ çитĕнÿсем туса пырĕç.

Вăрман хатĕрлемелли плана тултарнă

КОМСОМОЛЬСКИ, мартăн 31-мĕшĕ. (Телефонпа). Районти ĕçсыннисем кĕркунпе хĕллехи вăхăтра вăрман хатĕрлемелли плана мартăн 30-мĕшĕ тĕлне тултарчĕç. План тăрăх 42.100 кубометр йывăç касса хатĕрлемелле пулнă пулсан, 42.868 кубометр касса хатĕрленĕ, вăл шутра «Чăвашвăрман» тресчĕ енĕпе 34.390 кубометр касса хатĕрленĕ, государство планне 101 процент тултарнă. План тăрăх 23.100 кубометр йывăç турттарса кăлармалла пулнă пулсан, 23.829 кубометр турттарса кăларнă, вăл шутра «Чăвашвăрман» тресчĕ енĕпе 19.008 кубометр турттарса кăларнă, государство планне 100 процент тултарнă. Каснă йывăçа сул хĕррине илсе тухмалли задание 100 процент пурнăçланă.

Вăрман хатĕрлевĕнче уйрăмах Мичурин ячĕпе тăракан, «Красная звезда», «Алга», «Дружба», «Красное Сормово», «Светлая жизнь», «Искра», «Завет Ильича», Молотов ячĕпе, Калинин ячĕпе, Сталин ячĕпе, Жданов ячĕпе тăракан колхозсен колхозникĕсемпе руководителĕсем паха тĕслĕхсем кăтартрĕç.

Халĕ районти колхозниксем планран ирттерсе вăрман хатĕрлеççĕ.

КПСС Комсомольски райкомĕн секретарĕ А. ГАВРИЛОВ.
Райсовет исполкомĕн председателĕ П. ОСИПОВ.
Первомайски вăрманпромхозĕн директорĕ А. НАУМОВ.

ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕпе
Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитетĕнче

Апат-çимĕçпе промышленность таварĕсен ваккăн сутмалли государственнăй хакĕсене çĕнĕрен йÿнетесси çинчен

ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕпе Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕ **çапла йышăннă:**

1. 1953 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа апат-çимĕçпе промышленность таварĕсен ваккăн сутмалли государственнăй хакĕсене çакăн чухлĕ йÿнетес:

ÇĂКĂР, ÇĂНĂХ ТАТА МАКАРОНСЕМ

Ыраш çăкăрĕ, тулă çăкăрĕ, булкăсем, баранкăсем тата ытти çăкăрпа булка изделийĕсем 10%
Ыраш, тулă, кукуруза çăнăхĕ тата ытти çăнăхсем 10%
Макаронсем, вермишель, лапша тата ытти макарон изделийĕсем 10%

КĔРПЕ, РИС, БОБЫ ТАТА АПАТ-ÇИМĔÇ КОНЦЕНТРАЧĔСЕМ

Вир кĕрпи, хуратул кĕрпи, рис, пăрça тата ытти кĕрпесемпе пăрçасем 10%
Апат-çимĕç концентрачĕсем 10%
Типĕтнĕ кĕселсемпе желе 15%

ТЫРĂ ТАТА ФУРАЖ

Ыраш, тулă, сĕлĕ, урпа тата ытти тĕштырăсем, сăсăл, жмых, шротсем, комбикормсем, утă тата улăм 10%

АШ ТАТА АШ ПРОДУКЧĔСЕМ

Ĕне ашĕ, сурăх ашĕ, сысна ашĕ, кайăк-кĕшĕк, колбаса, сосискăсем, сарделькăсем, котлетсем, ашран, ашпа ÿсен-тăранран тата салăпа бобысенчен тунă консервăсем тата ытти аш продукчĕсем 15%

ПУЛĂ ТАТА ПУЛĂ ТАВАРĔСЕМ

Сивĕтнĕ, шăнтнă, тăварланă пулă, копченăй пулă, сельдьсем тата пулă консервисем вăтам шутпа 10%

ÇУ, ÇĂМАРТА ТАТА МОРОЖЕНĂЙСЕМ

Выльăх çăвĕ, çимелли сало, маргарин тата ÿсен-тăран çăвĕсем 10%
Соус «Майонез» тата ыттисем 10%
Çăмарта 10%
Мороженăй 10%

ÇĔРУЛМИ, ПАХЧА ÇИМĔÇ ТАТА УЛМА-ÇЫРЛА

Çĕрулми 50%
Хĕрлĕ кăшман 50%
Кишĕр 50%
Купăста тата ытти пахча çимĕçсем 50%
Йÿçĕтнĕ купăста 50%
Панулми 50%
Грушăсем 50%
Виноград 50%
Мандаринсем 50%
Апельсинсем 50%
Лимонсем 50%
Улма-çырла консервисем 25%
Типĕтнĕ пахча çимĕçсем 25%
Типĕтнĕ улма-çырлапа мăйăрсем 20%

САХĂР, КОНДИТЕРСКИ ТАТА БАКАЛЕЙ ТАВАРĔСЕМ

Сахăр-песок тата рафинад 10%
Карамель, конфетсем, шоколад, печени, вафли, кекссем, тортсем, пирожнăй, премĕксем, сухарисем тата ытти кондитерски çимĕçсем 10%
Варени, джем тата повидло 10%
Натуральнăй чей вăтам шутпа 20%
Натуральнăй кофе тата какао 20%
Витаминсем 10%
Шултра тăвар 30%
Вĕтетнĕ тăвар—чĕркеменни 20%
Чĕркенĕ тăвар 10%

ЭРЕХ, ЛИКЕРСЕМ, ХĔРЛĔ ЭРЕХСЕМ ТАТА САРА

Эрех 11%
Ликерсем, наливкăсем, настойкăсем, улма-çырла эрехĕсем, коньяксем тата советски шампански 15%
Сăра 15%
Виноград эрехĕ 5%

ПИР-АВĂР

Ситец, сатин, бязь тата çĕр мамăкĕнчен тунă ытти пир-авăрсем 15%
Натуральнăй пурçăнран тĕртсе тунă пир-авăр 15%
Камволь, çÿхе пустав тата ытти çăм тата çурма çăм пир-авăр 5%
Йĕтĕн пир-авăр 8%

ÇĔЛЕНĔ КĔПЕ-ТУМТИР, ТРИКОТАЖ ТАТА ПУÇА ТĂХĂНМАЛЛИ ЯПАЛАСЕМ

Çĕр мамăк пир-авăрĕнчен çĕлесе тунă платьесем, блузкăсем, аялти кĕпе-йĕм тата ытти япаласем вăтам шутпа 14%
Йĕтĕн пир-авăртан çĕлесе тунă платьесем, блузкăсем, аялти кĕпе-йĕм тата ытти япаласем вăтам шутпа 7%
Натуральнăй пурçăн пир-авăртан çĕлесе тунă платьесем, блузкăсем тата ытти япаласем 12%
Трикотаж япалисем вăтам шутпа 5%
Чăлхасемпе носкисем вăтам шутпа 20%
Çĕр мамăк, пурçăн, çурма çăм тата шултра çăм пуставĕнчен çĕленĕ пуçа тăхăнмалли япаласем 10%
Шлепкесем, беретсем тата çăмран тунă фетровăй калпаксем 15%
Улăм шлепкесем 10%
Тиртен тунă япаласемпе пĕчĕк тирсем 7%
Тилĕ тирĕпе песец тирĕсенчен тунă япаласем 15%

АТĂ-ПУШМАК

Сăран атă-пушмак 8%
Резина тĕплĕ сăран атă-пушмак 10%
Сăран вырăнне каякан япаласенчен çĕленĕ, пир-авăртан тунă тата комбинированнăй атă-пушмак—сăран тĕпли 12%
Сăран вырăнне каякан япаласенчен çĕленĕ, пир-авăртан тунă тата комбинированнăй атă-пушмак—резина тĕпли 20%
Резина ботысемпе атăсем 10%
Калушсем тата резинăран тунă ытти атă-пушмак 15%
Çăматă 5%

ГАЛАНТЕРЕЯ ТАВАРĔСЕМ

Пир-авăр галантерейĕ, тимĕр-тăмăр галантерейĕ, сăрантан тата сăран вырăнне каякан япаласенчен тунă галантерея вăтам шутпа 10%
Шăтăкласем, гардинăсемпе тюльсем 10%
Çĕвĕ йĕпписем, машина йĕпписем тата ытти йĕпсем 20%
Çип тата çип таврашĕ 10%
Пластмассăран тунă япаласем 10%
Шăл, тумтир тасатмалли щеткăсем тата шăртран тунă ытти щетка йышши япаласем вăтам шутпа 15%

СУПĂНЬ, ПАРФЮМЕРИПЕ КОСМЕТИКА ЯПАЛИСЕМ ТАТА ТАБАК

Хуçалăхра тыткалакан супăнь 15%
Пит çумалли супăнь 20%
Духисем, одеколонсем тата ытти парфюмерипе косметика таварĕсем 10%
Чи лайăх сортлă пируссем 10%
Ытти сортлă пируссем, сигаретсем тата табаксем 5%
Махорка 10%

КУЛЬТУРА ТАВАРĔСЕМПЕ ВЫЛЯМАЛЛИ ЯПАЛАСЕМ

Музыка инструменчĕсем вăтам шутпа 10%
Çырмалли хут, тетрадьсем, хутран тата картонран тунă ытти япаласем 10%
Карандашсем, перосем, ручкăсем, çырмалли тата чертеж тумалли ытти япаласем 15%
Автомат-ручкăсем тата карандашсем вăтам шутпа 20%
Резинăран, целлулоидран, тимĕр-тăмăртан тата ыттисенчен тунă вылямалли япаласемпе елкăсене илемлетмелли япаласем 10%

ФАРФОР, ФАЯНС, КĔЛЕНЧЕ ЯПАЛАСЕМ

Фарфорпа фаянс япалисем вăтам шутпа 15%
Кĕленче лампăсем тата пресласа тунă сортлă савăт-сапа 20%
Кантăкран тунă сортлă савăт-сапапа хуçалăхра кирлĕ савăт-сапа тата тĕкĕрсем 10%

ХУÇАЛĂХРА КИРЛĔ ТАВАРСЕМ

Электричество ламписем 25%
Йăлара усă курмалли электричество приборĕсем, электроарматура тата ытти йышши электричество таварĕсем 15%
Пылесоссем 25%
«ЗИС — Москва» холодильниксем тата кĕпе çумалли машинăсем 20%
Пуртăсем, пăчкăсем, сверлăсем, тимĕрçĕ, слесарь, столяр инструменчĕсем тата ытти инструментсем 20%
Сенĕксем, çавасем, çурласем тата ялхуçалăхĕнче кирлĕ ытти вак инвентарь 20%
Урапасем, кустăрмасем тата ытти урапа таврашĕ 10%
Кăмака тума кирлĕ тимĕр хатĕрсем 10%
Алюминирен тунă, эмалированнăй тимĕртен, цинкпа витнĕ тимĕртен, эмалированнăй чугунтан, латуньрен, тутăхман хурçăран, мельхиортан тунă савăт-сапа 1[illegible]
Якатса тунă тимĕр савăт-сапа [illegible]
Çĕçĕсем
Тимĕр-тăмăр япаласем, мясорубкăсем, керосинкăсем, лампăсем, хунарсем тата металран тунă ытти хуçалăх таварĕсем [illegible]
Çĕвĕ машинисем
Сĕтел-пукан
Ковĕрсем тата фабрикăра тунă ковĕр таврашĕ
Мамăк-тĕк япалисем
Клеенка, гранитоль тата коленкор 10%
Вата тата ватин 8%
Килте пир-авăра пĕветмелли сăрăсем 20%

СТРОИТЕЛЬСТВО МАТЕРИАЛĔСЕМ

Шифер тата çемçе çивитти 20%
Чÿрече кантăкĕ 10%
Сортлă тата çурт çине витмелли тимĕр 10%
Строительствăра усă курмалли пăтасем 25%
Такан пăтисем, атă пăтисем тата ыттисем 20%
Болтсем, заклепкăсем, йывăç валли винтсем, керамика плиткисем, сеткăсем, пралук тата тимĕр трубасем 20%
Цемент 25%
Лаксем, сăрăсем тата йăлара усă куракан хими таварĕсем 10%
Санитари техникин оборудованийĕ 10%
Линолеум 15%
Шпалерсем 20%

МЕДИКАМЕНТСЕМ ТАТА САНИТАРИПЕ ГИГИЕНА ЯПАЛИСЕМ

Санитарипе гигиена валли резинăран тунă япаласем 20%
Медикаментсем тата санитарипе гигиенăн ытти япалисем вăтам шутпа 15%

СПИЧКА, КРАÇÇЫН ТАТА БЕНЗИН

Спичка 17%
Краççын 25%
Бензин тата сĕрмелли çусем 25%

ВЕЛОСИПЕДСЕМ, СЕХЕТСЕМ ТАТА ЫТТИ ПРОМТАВАРСЕМ

Велосипедсем тата вĕсен запаслă пайĕсем 10%
Çăмăл автомобильсемпе мотоциклсен покрышкисем тата камерисем 10%
Велосипедсемпе спорт мечкисен покрышкисем тата камерисем 20%
Конькисем 10%
Йĕлтĕрсем 15%
Сунарçă пăшалĕсем, вĕсен хатĕрĕсем тата боеприпассем 15%
Сунарçăсемпе пулăçăсен хатĕрĕсем 10%
Алла çыхса çÿремелли сехетсем 5%
Кĕсъене чиксе çÿремелли, стена çине çакмалли тата ытти сехетсем 10%

2. Çакна май ресторансенче, столовăйсенче тата обществăллă апатланăвăн ытти предприятийĕсенче те хаксене йÿнетес.

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Кружоксем лайăх ĕçлеççĕ

КАНАШ. МТС-ри пуçламăш парторганизаци коммунистсемпе партире тăманнисем механизаторсене коммунизмла воспитани парассишĕн тăрăшса ĕçлет. Марксизм-ленинизм теорине вĕренме кунта икĕ кружок организациленĕ, вĕсенче пурĕ 50 çынна яхăн вĕренет. Халĕ кружокра Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съезчĕн историллĕ решенисене вĕренеççĕ. Занятисем яланах йĕркеллĕн иртеççĕ, кружокра вĕренекенсен пĕлĕвĕсем ӳссе пыраççĕ.

Кружок руководителĕсем Н. Матвеевпа Ф. Алешин юлташсем занятисене лайăх хатĕрленсе ирттереççĕ. Вĕсем уйрăм темăсем тăрăх наглядлă пособисемпе, карттăсемпе анлăн усă кураççĕ. Ку тĕлĕшпе вĕсене КПСС райкомĕн библиотеки пысăк пулăшу парать. Райком библиотекинчен вĕсем альбомсем, карттăсем т. ыт. те илеççĕ, вĕсемпе занятисем ирттернĕ чух усă кураççĕ.

Кружок руководителĕ Н. Матвеев юлташ нумай пулмасть кружокра вĕренекенсене партин XIX-мĕш съездĕнче Г. Маленков юлташ тунă доклада вĕрентрĕ. Ку темăпа ирттернĕ занятисенче Матвеев юлташ партин XVII—XVIII-мĕш съезчĕсенче Сталин юлташ тунă отчетлă докладсемпе, Мускаври Сталински районĕнчи суйлавçăсем умĕнче каланă сăмахсемпе тата партин XIX-мĕш съездĕнче каланă сăмахпа усă курчĕ.

Кружоксенче халĕ И. В. Сталин юлташа пытарнă чух Г. М. Маленков, Л. П. Берия, В. М. Молотов юлташсем каланă сăмахсене тĕплĕн вĕренеççĕ. Партипе правительство пĕтĕм совет халăхне чĕнсе калани çине ответлесе, МТС коллективĕ халĕ нихçанхинчен те ытларах вăй хурса ĕçлет.

МТС-ра ĕçлекен механизаторсем хушшинче халĕ ССР Союзĕн Верховнăй Совечĕ йышăннă законсемпе постановленисем çинчен агитаторсем калаçусем ирттереççĕ, хаçат-журналсем вуласа параççĕ.

В. ИГНАТЬЕВ.

Парторганизацисемпе ĕççынни массисем хушшинчи çыхăнăва çирĕплетсе пырассишĕн

КПСС Центральнăй Комитечĕ тата И. В. Сталин юлташ партипе ĕççынни массисем хушшинчи çыхăнăва куллен çирĕплетсе пыма вĕрентеççĕ. «Пирĕн партин вăйĕ тата никам çĕнтерейменлĕхĕ вăл,—тесе çырнă КПСС XIX-мĕш съезчĕ йышăннă парти Уставĕнче,—парти халăхпа тăванла, ним уйрăмми тачă çыхăнса тăнинче пулнине асра тытса, массăсемпе çыхăнса тăрассине куллен çирĕплетсе пымалла, ĕççыннисен ыйтăвĕсемпе вĕсене мĕн кирлине вăхăтра туса памалла, партире тăман массăсене парти политикине решенийĕсен тĕп шухăшне ăнлантарса памалла».

Партиллĕ ĕç тăвас тени—массăсемпе тӳрремĕн хутшăнса ĕçлемеллине пĕлтерет. Ĕççыннисемпе тачă çыхăнса ĕçлени парторганизацисене çĕннине, лайăх пуçарăва вăхăтра асăрхаса илме тата çитменлĕхсене çиĕнчех палăртма май парать.

Ĕçри опыт çакна кăтартать: массăсемпе тачă çыхăну тытса, ĕççыннисене куллен политикăллă воспитани парса пыракан, вĕсене партипе правительство решенийĕсемпе тăтăшах та тĕплĕн паллаштарса пыракан парторганизацисем яланах ăнăçлă ĕçлеççĕ.

Пирĕн районти Молотов ячĕпе тăракан колхозри пуçламăш парторганизаци актив çине таянса, колхозниксен массисемпе тачă çыхăнса ĕçлет. Кунта коммунистсене пурне те артель хуçалăхĕн ответлă участокĕсене уйăрса лартнă. Коммунистсем колхозниксемпе куллен хутшăнаççĕ, производствăн хăйсем ĕçлекен участокĕсенче чи лайăх тĕслĕхсем кăтартаççĕ, çапла вара артель членĕсен обществăллă хуçалăха вăйлатас туйăмне çĕклеççĕ. Пуçламăш парторганизаци колхоза организацилле хуçалăх тĕлĕшĕнчен малалла çирĕплетме йышăннă хăйĕн решенийĕсене колхозниксен массисем патне çиĕнчех çитерет, вĕсене пурнăçлама колхозниксен вăйне вăхăтра тата кирлĕ таран мобилизацилет.

Пуçламăш парторганизаци массăсемпе тачă çыхăну тытса ĕçлени колхоза хуçалăхпа политикăллă ĕçсене ăнăçлă туса пыма пулăшать. Артель иртнĕ ялхуçалăх çулне йĕркеллĕн те кăтартуллăн вĕçлерĕ.

Колхозниксем производство ĕçĕнче пурте активлă ĕçлеççĕ. Иртнĕ çулта кашни колхозник, вăтам шутпа илсен, 330-шар ĕçкунĕнчен кая мар ĕçлесе илнĕ. Колхозниксемпе колхозницăсен куллен ӳссе пыракан хастарлăхĕ умра тăракан тĕп задачăсене пурнăçлас тĕлĕшпе ӳсĕмсем тума май пачĕ. Артель иртнĕ çулта кашни гектар пуçне вăтам шутпа 16,1-шер центнер тĕштырă, 17,4-шер центнер ыраш, 19,34-шер центнер пăрça туса илчĕ тата ытти культурăсен тухăçлăхне те ӳстерчĕ. Иртнĕ çулта колхоз малтанхи çулхинчен 52 пин тенкĕ ытларах тупăш тума пултарчĕ. Артель членĕсем ĕçкунĕ пуçне 3,5-шер килограмм çĕрулми валеçсе илчĕç. Тăрăшса ĕçлекен колхозниксем (сăмахран, И. Степанов, И. Данилов, И. Никитин, Ф. Петров тата ытти юлташсем те) 150—250-шар пăт тĕштырă илчĕç.

Колхозри пуçламăш парторганизаци артель членĕсен ĕçри хастарлăхне малалла ӳстерсе пырать. Парторганизаци пуçарăвĕпе колхозниксем Чкаловски районĕнчи ялхуçалăх ĕçченĕсем чĕнсе калани çине сӳтсе яврĕç. Артель членĕсем 1953 çулта тырпулпа обществăллă выльăх-чĕрлĕх тухăçлăхне ӳстерес тесе чылай пысăкрах обязательствăсем илчĕç. Вĕсем хăйсене ăмăртса ĕçлеме районти «Красный флаг» ялхуçалăх артелĕн членĕсене социализмла ăмăртăва чĕнчĕç.

Молотов ячĕпе тăракан колхозри пуçламăш парторганизаци пек массăсемпе тачă çыхăну тытса ĕçлени çинчен калакан тĕслĕхсем тата та илсе кăтартма пулать. Анчах та районта çителĕксĕр ĕçлекен парторганизацисем те сахал мар-ха. Акă, «Победа» колхозри пуçламăш парторганизацине илер. Парторганизаци хăйĕн ĕçне колхозниксен массисемпе, активпа тачă çыхăнса туса пымасть. Калас пулать, парторганизаци колхоз производствине вăйлатас тĕлĕшпе решенисем йышăнкалать, анчах та вĕсене организациллĕ ĕçсемпе çирĕплетеймест. Политикăллă-массăллă ĕçе кирлĕ пек тăвайманнине пула йышăннă решенисем час-часах пурнăçланмасăр юлаççĕ.

Парторганизацие унăн руководителĕсем колхозри активăн тата артелĕн ытти членĕсен лайăх шухăшĕсене шута илмеççĕ, малта пыракан производственниксен опытне ытти колхозниксем патне çитерес ыйтупа та интересленмеççĕ.

Иртнĕ отчетпа суйлав пухăвĕнче колхозниксем артель хуçалăхне вăйлатас тĕлĕшпе сахал мар кирлĕ сĕнӳсем пачĕç. Анчах хаклă сĕнӳсемпе канашсене колхоз правленийĕ те, пуçламăш парторганизаци те тĕплĕн шута илсе пĕтĕçтерейменрĕç. Парторганизаци массăсен сĕнĕвне шута илменни, активран уйăрса кайни, паллах, çитменлĕхсене пĕтерес, шалти мĕнпур вăя мобилизацилес ĕçре чăрмав кӳрет. Отчетпа суйлав пухăвĕ пулнăранпа самаях вăхăт иртрĕ ĕнтĕ. Анчах пуху решенийĕсенчен пĕри те тĕплĕн пурнăçланса пымасть-ха.

Ялхуçалăхĕнчи тĕп задачăна—тырпул тухăçлăхне ӳстерсе пырас тата выльăх-чĕрлĕх йышĕпе унăн тухăçлăхне нумайлатас задачăна ăнăçлă пурнăçлама колхозсене организаципе хуçалăх тĕлĕшĕнчен тăтăшах тĕреклетсе пыни, ялхуçалăх артелĕн Уставне пĕр пăркаланмасăр пурнăçласа пыни кирлĕ. Калас пулать, пирĕн районти колхозсенче отчетпа суйлав пухăвĕсем критикăпа самокритикăна анлă сарнипе пулса иртрĕç. Отчетпа суйлав пухăвĕсенче 800 колхозник ытла тухса каларĕ. Активистсем, производствăра тăрăшса ĕçлекен колхозниксемпе колхозницăсем артель хуçалăхне вăйлатмалли лайăх майсене палăртрĕç.

Умра тăракан çав тĕп задачăна пурнăçлама, колхозниксем панă сĕнӳсене пурнăçа кĕртме пирĕн пур условисем те çителĕклĕ. Пирĕн, пуринчен малтан, пуçламăш парторганизацисен, коммунистсемпе комсомолецсен, мĕнпур активăн ĕççыннисем хушшинчи влиянине ытларах ӳстерсе пымалла, политикăллă-массăллă ĕçе вăйлатмалла.

Парти райкомĕ ĕççыннисен политикăллă активлăхне ӳстерес тĕлĕшпе сахал мар вăй хучĕ. Районти колхозсемпе предприятисенче тата учрежденисенче ĕçлекенсем хушшинче политикăллă воспитани ĕçне тума 842 агитатор уйăрнă. Агитаторсем ĕççыннисене партипе правительство решенийĕсем çинчен тăтăшах ăнлантарса параççĕ, умра тăракан задачăсем çинчен каласа параççĕ. Колхозлă ял çыннисем уйрăмах партин XIX-мĕш съезчĕн материалĕсемпе, И. В. Сталин юлташăн генилле ĕçĕсемпе калама çук хытă интересленеççĕ. Вĕсем коммунизм строительствин харпăр хăй ĕçлекен участокĕсенче çĕнĕрен те çĕнĕ ӳсĕмсем тăвас тесе кĕрешеççĕ. Агитаторсем ĕççыннисен çав патриотла туйăмне, ĕçри хавхаланăвне тата та ытларах çĕклеме пулăшаççĕ.

Нумаях пулмасть КПСС райкомĕн пленумĕ политикăллă-массăллă ĕçе лайăхлатасси çинчен сӳтсе яврĕ. Райком пленумĕ, чылай колхозсенче политикăллă воспитани ĕçне вăйлатнине палăртнипе пĕрлех, пирĕн кулленхи ĕçри пысăк çитменлĕхсене те кăтартса пачĕ. Пленум мĕнпур колхозсенчи пуçламăш парторганизацисене политикăллă-массăллă ĕçе вăйлатма сĕнчĕ, çитменлĕхсене пĕтермелли майсене палăртрĕ. Халĕ районти пуçламăш парторганизацисем райком пленумĕн решенийĕсене сӳтсе яваççĕ, политикăллă-массăллă ĕçе вăйлатас тĕлĕшпе тивĕçлĕ мерăсем йышăнаççĕ.

Парти райкомĕ çуракине хатĕрленсе ирттерес тапхăрта политикăллă-массăллă ĕç тума ятарласа план туса хатĕрлерĕ. Колхозсенчи пуçламăш парторганизацисем те çак çитес хĕрӳллĕ тапхăрта политикăллă-массăллă ĕçе вăйлатас тĕлĕшпе ятарласа плансем тăваççĕ.

Юлашки вăхăтра ĕççыннисен политикăллă активлăхне вăйлатса пырас ĕçе районти ертсе пыракан работниксем активлăрах хутшăнакан пулчĕç. Райком секретарĕсемпе бюро членĕсем тата ытти ответлă работниксем час-часах ĕççыннисене докладсемпе лекцисем вуласа параççĕ, пуçламăш парторганизацисенче тăтăшах пулса партиллĕ-политикăллă ĕçе йĕркелеме пулăшаççĕ.

Районти ĕççыннисен кĕрешӳри пултарулăхĕ хальхи вăхăтра ӳснĕçемĕн ӳссе пырать. Ялхуçалăх ĕçченĕсен ăмăртăвне малалла вăйлатса пырса, парти организацийĕсемпе ĕççыннисем хушшинчи çыхăнăва çирĕплетсе, эпир умри задачăсене вăхăтра пурнăçласа пыма тăрăшатпăр.

М. ЗАЙЦЕВ,
КПСС Шупашкар райкомĕн секретарĕ.

КПСС райкомĕн бюровĕ [illegible]лсенче кĕнеке сарасси çинчен

[illegible] Элĕк райкомĕн бюровĕ ялсенче [illegible]рас ĕç мĕнле пулса пыни çин[illegible]яврĕ. Бюро районти ялсенче [illegible] ĕçе çителĕксĕр йĕркеленине [illegible]

[illegible]малли плана Чăвашкниго[illegible]инĕ 72,4 процент, «Союзпи[illegible]ти уйрăмĕ—51,6 процент, [illegible]юз—40 процент кăна тул[illegible]

[illegible]ăтрах колхозниксем политика, [illegible]отехни[illegible] ыйтăвĕсемпе çырнă кĕнекесене тата [illegible]илемлĕ литература произведе[illegible]ĕсене [illegible]тларах туянасшăн. Ĕççынни[illegible]сен çак [illegible]йтăвĕ çителĕксĕр тивĕçсе пырать. Кĕнекесем сутас ĕçе уйрăмах райпотреб[illegible]юз магазинĕсенче çителĕксĕр йĕркеленĕ. 1952 çулта раймаг 47 пин тенкĕлĕх кĕнеке кӳрсе килес вырăнне 16 пин тенкĕлĕх кăна кӳрсе килнĕ.

Районта ĕççыннисем хушшинче кĕнекене пропагандăласси çителĕксĕр пулса пырать. Нумай библиотекăсенче витринăсем, кĕнекесен списокĕсем çук, вулакансен конференцийĕсем пулмаççĕ. Кĕнекесемпе хаçат-журналсем сутма район центрĕнче пĕр киоск кăна тунă. Çавăн пек киоскене ялсенче уçни те кирлĕ.

КПСС райкомĕн бюровĕ районта кĕнеке сарас ĕçе лайăхлатма решени йышăнчĕ.

В. ПЕТРОВ.

Сесси материалĕсене вĕренеççĕ

ИШЛЕЙ. Районти ĕççыннисем СССР Верховнăй Совечĕн тăваттăмĕш сессийĕн решенийĕсене пысăк хаваслăхпа кĕтсе илчĕç. Сесси материалĕсене радиопа итленĕ хыççăнах агитаторсем колхозниксене государство влаçĕн аслă органĕнче пăхса тухнă ĕçсемпе паллаштарма тытăнчĕç.

Молотов ячĕпе тăракан колхозри 4-мĕш бригадăн клубĕнче халăх туллиех. Ку бригадăра çичĕ çул вĕренмелли шкулта вĕрентекен Г. Иванова учительница-комсомолка агитатор пулса ĕçлет. Агитатор сесси решенийĕсемпе тата СССР Министрĕсен Совечĕн Председателĕн Г. М. Маленков юлташăн доклачĕпе паллаштарнă хыççăн колхозниксем хăйсен шухăш-кăмăлĕсене каласа пачĕç.

Колхоз ĕçченĕсем çуракине лайăх ирттерме пулчĕç. Бригада çуракине хатĕрленсе çитнĕ. Бригада тимĕрçи Г. Федоров тăрăшнипе сеялкăсене тата плугсемпе сӳресене юсаса çитернĕ. Бригадăн акма вăрлăх çителĕклĕ. Калчасене апат пама удобренисем хатĕрленĕ. Халĕ колхозниксем уйсенче çурхи шыва ытларах тытса хăварма хатĕрленеççĕ.

А. ЕГОРОВ.

Районти хаçатсене пăхса тухни

Партилле пропаганда ыйтăвĕсене туллин çутатмалла

И. В. Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă генилле произведенине тата партин XIX-мĕш съезчĕ йышăннă решенисене мĕнпур коммунистсемпе кадрсене вĕрентесси хальхи вăхăтра парти организацийĕсен чи пысăк задачи пулса тăрать. Çак историллĕ документсене партиллĕ вĕренĕве хутшăннă пур юлташсене те тĕплĕн ăнлантарса памалла.

Партилле пропагандăн идейăллă шайне ӳстерес ĕçре районсенчи тата хуласенчи хаçатсем пысăк вырăн йышăнаççĕ. Çапла пулин те, чылай хаçатсем юлашки вăхăтра коммунистсемпе кадрсене политикăллă пĕлӳсем парас ĕçпе çыхăннă ыйтусем çине тимсĕр пăхаççĕ, марксистла-ленинла вĕренӳ ыйтăвĕсене çиелтен, хутран-ситрен кăна çутатаççĕ.

Политикăлла вĕренĕве йĕркелес тĕлĕшпе Сĕнтĕрвăрри районĕнчи «Ленин ялавĕпе» хаçат (редакторĕ К. Наманган юлташ) парторганизацисене çителĕксĕр пулăшать. Съезд йышăннă решенисене тата Сталин юлташ произведенине вĕренни çинчен хаçат пурĕ те виçĕ информаци кăна пичетлесе кăларнă.

Çав вăхăтрах районта партиллĕ вĕренӳре чылай çитменлĕхсем пур. Пĕр номерте, сăмахран, хаçат КПСС райкомĕн пленумĕ çинчен çырнă. Пленумра судоверфьри парторганизаци ĕçĕсем çинчен сӳтсе явнă пулнă. Хаçат çапла палăртнă:

«Парти вĕренĕвĕн системинчи кружоксен ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пур... Парти историне вĕренмелли кружокра занятисене идея тĕлĕшĕнчен аялти пусăмра ирттернĕ, занятисене сахал çӳренĕ. И. В. Сталин биографине вĕренмелли кружокра ку тарана çитсе те партин XIX-мĕш съезчĕн материалĕсене вĕренме тытăнман».

Сĕнтĕрвăрри районĕнчи ытти пуçламăш парторганизацисенче те коммунистсен политикăлла вĕренĕвне йĕркелес ĕçре çитменлĕхсем нумай. Анчах районти хаçат съезд решенийĕсемпе материалĕсене, Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă произведенине вĕренесси мĕнле пынине çителĕклĕ çутатмасть.

Муркаш районĕнчи «Колхозник сасси», Çĕмĕрле районĕнчи «Социализмлă ĕç», Элĕк районĕнчи «Колхозник хаçачĕ» хаçатсем те партилле вĕренӳ мĕнле пыни çинчен çителĕклĕ çырмаççĕ. Асăннă хаçатсен редакторĕсем И. В. Сталин юлташăн генилле произведенине тата партин XIX-мĕш съезчĕн материалĕсемпе решенийĕсене пропагандăлас ĕçĕн пысăк пĕлтерĕшне ăнланса илмен пулас. Хаçатсенче политшкулсемпе кружоксенче вĕренекенсен, марксистла-ленинла теорие харпăр хăй тĕллĕн вĕренекенсен, пропагандистсен, пуçламăш парторганизаци секретарĕсен статйисем сахал пичетленсе тухни шăпах çав çитменлĕхрен килнĕ. Хаçатсем пропаганда ĕçĕнчи çитменлĕхсене питĕ хăюсăр критиклеççĕ.

Чылай хаçатсем политикăлла вĕренӳ çинчен информациллĕ статьясем пичетленипех лăпланаççĕ. Çав статьясенчен хăш политшкулта е кружокра миçе заняти пулнине кăна пĕлме пулать. Хаçатсен редакторĕсем пропагандăри чи кирлĕ ĕç çине—занятисем идейăпа политика тĕлĕшĕнчен мĕнле иртни çине çителĕклĕ пăхмаççĕ, марксистла-ленинла теорие творчествăллăн вĕренессине çыхăнса тăракан ыйтусене çутатмаççĕ.

Çак çитменлĕхсем, сăмахран, Шупашкар районĕнчи «Ленин çулĕпе» хаçатăн та пур. Партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсемпе материалĕсене вĕренни çинчен хаçатра юлашки вăхăтра темиçе статья пичетленсе тухрĕ. Анчах çак статьясенче занятисен пахалăхĕ çинчен нимĕн те каламан. «Сталин юлташăн çĕнĕ ĕçĕпе съезд материалĕсене анлăн вĕренер» ятлă умстатьяра:

«Парти вĕренĕвĕн системинчи хальхи вăхăтри тĕп задача вăл,—тесе çырать хаçат, — Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă ĕçне, партин XIX-мĕш съезчĕн решенийĕсемпе материалĕсене кадрсемпе мĕнпур коммунистсене вĕрентесси пулать. Политшкулсемпе кружоксенче çак чаплă документсен идейисене тĕплĕн те анлăн ăнлантарса памалла. Занятисене идея тĕлĕшĕнчен çӳлĕ пусăмра ирттермелле. Сталин юлташăн генилле ĕçĕнчи теориллĕ положенисене пропагандăласси коммунизм строительствин практикăллă задачисемпе тачăн çыхăнса тăмалла».

Ку тĕрĕсех ĕнтĕ. Анчах çак умстатья тухнă хыççăнхи номерсенче политикăлла вĕренĕвĕн идейăллă шайĕ çинчен пĕтĕмĕшле сăмахсем кăна çырнă. «Съезд материалĕсене вĕренеççĕ» ятлă статьяра сăмах машина-трактор станцийĕнче ку ĕç мĕнле пынине çутатнă. Унта миçе çын вĕреннине, миçе заняти ирттернине кăтартса панă. Вĕренӳ пахалăхĕ çинчен вара «занятисем яланах интереслă та активлă иртеççĕ» тенĕ те, урăх нимĕн те каламан.

Районсемпе хуласенчи хаçатсен пирĕн кадрсене, мĕнпур коммунистсене идея тĕлĕшпе хĕçпăшаллантарасси çине тимлĕ пăхмалла. Коммунистсем хăйсен идейăллă-теориллĕ пĕлĕвĕсене мĕнле ӳстерни çинчен хаçатсен тăтăшах тата тĕплĕн çутатмалла, пропаганда ĕçĕнчи опыта пĕтĕçтерсе сармалла, çитменлĕхсене хăюллăн критиклемелле. Политшкулсемпе кружоксенче занятисем идея тĕлĕшĕнчен мĕнле иртнине тарăнрах тишкермелле, теорие творчествăллăн вĕренессишĕн кĕрешмелле.

КПСС райкомĕсемпе хула комитечĕсен задачи партилле пропагандăна йĕркелес ĕçре хăйсен хаçачĕсен пĕлтерĕшне ӳстересси пулать. Парти комитечĕсен хăйсен хаçачĕсене пропагандăпа агитацие лайăхлатмалли никĕс вырăнне хурса хакламалла тата, вĕсем çине таянса, массăсене политикăлла воспитани парас ĕçе пур майсемпе те лайăхлатса пымалла.

Çĕмĕрлесем Мускаври университет çуртне тунă çĕрте

Мускавра, Ленинские горы ятлă вырăнта, М. В. Ломоносов ячĕпе тăракан государство университечĕн çĕнĕ çуртне туса пĕтереççĕ. И. В. Сталин пуçарнипе тума тытăннă çак наука двореçĕ питĕ пысăк. Университетăн пĕтĕм çурчĕн калăпăшĕ 2.600 пин кубометр шутланать. Коридорсен тăршшĕ 33 километр пулать. Университетăн пур пӳлĕмĕсене те кĕрсе тухас пулсан, 145 километр утмалла.

Сталин саманинчи çак пысăк стройкăна пĕтĕм çĕршыв тăвать. Çĕршывri 500 ытла предприяти университет валли тĕрлĕрен оборудовани хатĕрлет. Çак предприятисен шутĕнче Çĕмĕрлери сĕтел-пукан комбиначĕ те пур. Икĕ çул хушшинче комбинат университет валли 24.340 пин тенкĕлĕх лаборатори сĕтелĕсемпе шкафсем туса пачĕ. Ку сĕтелсемпе шкафсене физика, хими тата биологипе тăпра факультечĕсен лабораторийĕсене, астрономи обсерваторине вырнаçтараççĕ.

Сĕтелсемпе шкафсене вырнаçтарас тĕлĕшпе сĕтел-пукан комбинатĕнчи опытлă столярсен пĕр ушкăнĕ ĕçлет. Вĕсене ертсе пыракан Михаил Юрьевич Свердлинский юлташ пирĕн корреспондента çапла каласа панă:

— Пирĕн комбинат туса хатĕрленĕ сĕтелсемпе шкафсем чи кăткăс шутланаççĕ. Сăмахран, хими лабораторисене вырнаçтарса лартакан шкафсен тăршшĕ пĕр метртан пуçласа 5 метра çитет, çӳллĕшĕ—виçĕ метр çурă. Вĕсене пухса (кунтан сӳтсе илсе кайнă) вырнаçтарса лартасси тата кăткăсрах ĕç. Çапах пирĕн столярсем, хăйсен пĕтĕм пĕлĕвĕпе тата опычĕпе усă курса, ĕçе лайăх тума хăнăхса çитрĕç. Паянхи кун тĕлне эпир тĕп корпусри 7-мĕш, 8-мĕш, 20-мĕш, 25-мĕш тата 1-мĕш хутри лаборатори пӳлĕмĕсене сĕтелсемпе шкафсем вырнаçтарса пĕтертĕмĕр. Химин факультечĕн лабораторийĕсенче 500 пысăк шкаф, 300 сĕтел вырнаçтарнă. Çак ĕçсен пахалăхне пирĕнтен питĕ лайăх хакласа йышăннă. Халĕ пирĕн столярсем химипе физика лабораторийĕсенче сĕтелсем вырнаçтарса лартас тĕлĕшпе ĕçлеççĕ.

Пирĕн рабочисем питех те тăрăшса ĕçлеççĕ. Пире унта шӳтлесе «тĕп ĕçсене тăвакан мебельщиксем» тесе хисеплеççĕ. Пирĕнпе юнашар Ленинградри икĕ фабрикăран пынă столярсем ĕçлеççĕ. Час-часах вĕсем пирĕн столярсенчен тĕрлĕ канаш ыйтма пыраççĕ.

Пирĕн ушкăнра халлĕхе 32 рабочи, вĕсенчен çурри яхăн чăвашсем. Çак кунсенче тата 18 — 20 рабочи пырать. 4-мĕш цехран пынă М. Микин юлташ бригадинче пĕтĕмпе тенĕ пекех опытлă столярсем. Вĕсем хăйсен нормине 2—2.5 хут ирттерсе тултараççĕ, çав хушăрах çамрăксене вĕрентсе пыраççĕ. Çапла, сăмахран, М. Одров комбинатри чи лайăх стахановецсенчен пĕри, çамрăксен бригадине ертсе пырать. Вăл вĕрентсе пынипе çамрăк столярсем П. Свищов, А. Федоров тата ремесла училищинче вĕреннĕ Г. Янин юлташсем хăйсен сменăри нормисене икшер хут тултарса ĕçлеççĕ. Çамрăксен тепĕр бригадине эпир «Шалфеевсен бригади» тетпĕр. Ку бригадăра икĕ пĕр тăван чăваш—Григорипе Ювенир Шалфеевсем тата ремесла училищинче вĕреннĕ Н. Желтухин юлташсем ĕçлеççĕ. Ку бригада та паха тĕслĕх кăтартать.

Ответлă ĕçре рабочисем хăйсен ăсталăхне, ĕç квалификацине ӳстереççĕ. Çапла, сăмахран, Çĕмĕрле ялĕнчи А. Отрыванкин 7 уйăх хушшинче 4-мĕш разрядри столяртан 6-мĕш разрядри столяр-монтаж ĕçĕнчи специалист пулса тăчĕ.

Нумаях пулмасть кунти рабочисен пухăвĕ пулса иртрĕ. Г. М. Маленков, Л. П. Берия тата В. М. Молотов юлташсем И. В. Сталина пытарнă чухне калани çине ответлесе, рабочисем хăйсен умне лартнă задачăна чыслăн пурнăçлама обязательство илчĕç.

Двигатель туяннă

Туçари вăтам шкул çак кунсенче куçса çӳрекен электродвигатель туянчĕ. Унпа тĕрлĕ опытсем тунă çĕрте усă кураççĕ тата чылай классене ток парса çутатаççĕ. Çавăн пекех электродвигатель шкулти радиоузела та энерги парса тăрать.

Çамрăк техниксен кружокĕ çумĕнче электродвигатель ĕçлеттерме вĕренме уйрăм секци уçнă. Унта 20 çын вĕренет.

Шкул çавăн пекех физика приборĕсем те чылай туяннă.

Г. ПЛЕЧОВ.
А. КОЗЛОВ.

Чкаловски районĕ.

Çирĕп пĕлӳсем пама тăрăшатăп

Пропагандист пулса эпĕ улттăмĕш çул ĕçлетĕп. Çак вăхăт хушшинче эпĕ нумай коммунистсемпе комсомолецсене тата партире тăман колхозниксемпе колхозницăсене марксизм-ленинизм теорине вĕренме пулăшрăм. Эпĕ вĕрентнĕ колхозниксемпе колхозницăсенчен чылайăшĕ пыра-киле колхозлă ялăн ăста руководителĕсем пулса тăчĕç, вĕреннĕ чухне илнĕ пĕлӳпе ĕçре туллин усă курса колхозри обществăллă хуçалăха тĕреклетес ĕçе ăстан ертсе пыраççĕ. Çакă ĕнтĕ мана хам тăвакан ĕçе чунтан юратма, унăн хакне чĕререн ăнланма пулăшать, колхозлă ял çыннисене вĕрентес ĕçе çĕнĕрен çĕнĕ вăй хума, занятисене ирттернĕ чухне тата та лайăхрах, усăллăрах майсемпе усă курма чĕнет.

Хамăн ĕçĕн ответлăхĕ политкружоксенче партин XIX-мĕш съезчĕн материалĕсене, Сталин юлташ съездра каланă сăмаха тата унăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă генилле произведенине вĕренме тытăнсан татах ӳсрĕ. Вĕренекенсене çак аслă программăпа хĕçпăшаллантарассинчен чыслăрах ĕç çук та темелле.

Манăн политкружокра 12 çын вĕренет. Вĕсенчен нумайăшĕ колхозри ответлă, ертсе пыракан вырăнсенче ĕçлеççĕ. Занятисене кашни эрнерех пĕр кун—юнкун ирттеретпĕр. Паянхи куна эпир Сталин юлташăн сăмахне тата Г. Маленков юлташ партин XIX-мĕш съездĕнче Центральнăй Комитет ĕçĕсем çинчен туса панă отчетлă доклада вĕренсе пĕтертĕмĕр.

Занятисене идея енчен çӳлĕ пусăмра, ăнланмалла тата пурне те интереслентермелле ирттерес тесен, пропагандистăн хăйĕн материала лайăх пĕлмелле. Эпĕ çапла тăватăп та. Учитель пулса ĕçленĕ май, эпĕ вĕрентес ĕçĕн нумай майĕсемпе меслечĕсене пĕлетĕп. Анчах политкружокра хăйне уйрăм енĕсем пур. Кунта урокра усă куракан майсем кăна çитмеççĕ, материала кашни вĕренекенех тĕплĕн ăнлантарас тесен, вĕренекенсем пурнăçне, ĕçлекен колхоз пурнăçне, унăн çитĕнĕвĕсене, унăн кулленхи ĕçĕсене лайăх пĕлме кирли çинчен калать. Ку ĕнтĕ кулленех колхозниксем патĕнче нумай пулмалли çинчен, кашни колхозник-вĕренекен паян мĕн ĕçленине, мĕнле çитĕнӳсем тунине лайăх пĕлме кирли çинчен калать. Вĕренекен колхозникăн кулленхи пурнăçне лайăх пĕлсен çеç материала вырăнти фактсемпе туллин усă курса каласа пама пулать. Вырăнти фактсемпе туллин усă курса, занятисене калаçу майлă ирттерни вара занятин идейине, пахалăхне çĕклемелли чи лайăх меслет пулса тăрать.

Эпĕ ертсе пыракан политкружокра выльăх-чĕрлĕх пăхакансем те вĕренеççĕ. «Совет Союзĕн шалти лару-тăрăвĕ» темăпа заняти ирттернĕ чухне эпĕ колхозсем умне партин XIX-мĕш съезчĕ пысăк задачăсем кăларса тăратни çинчен, çак задачăсенчен пĕри выльăх-чĕрлĕх йышне ӳстересси тата унăн продуктивлăхне хăпартасси пулни çинчен каласа патăм. Ку вăхăтра выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç «Гигант» колхозра мĕнле пулса пыни çинчен, çак ĕçре колхоз чылай пысăк çитĕнӳсем туни çинчен, çавăнпа пĕрлех ĕçре пысăк çитменлĕхсем пурри çинчен те каласа патăм.

Вырăнти фактсемпе усă курни вĕренекенсене калаçăва активлăн хутшăнтарчĕ. Вĕсем выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçри çитменлĕхсене XIX-мĕш съезд тĕрĕс кăтартса пани çинчен тата колхозра выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕç мĕнле пулса пыни çинчен каласа пачĕç, ĕçри çитменлĕхсем мĕнрен килнине, вĕсене пĕтерес тесен колхоз правленийĕн тата коммунистсемпе активистсен мĕн тумаллине палăртрĕç. Калаçăва колхоз правлени членĕсем, рядовой колхозниксем те активлăн [illegible] шăнаççĕ. Занятисенче колхоз председателĕн З. Быков юлташăн ытларах калаçмалла пулать, мĕншĕн тесен занятисенче хускатакан кашни ыйту ăна нумайрах тивет. Çапла вара пирĕн занятисем вĕренекенсен ĕçри ответлăхне, активлăхне ӳстерекен, вĕсене çĕнĕ вăй-хăват хушакан шкул пулса тăраççĕ.

Занятисенче калаçу меслечĕпе çеç мар, курса вĕренмелли пособисемпе те анлăн усă куратăп. Совет çĕршывĕ ӳссе чечекленнине кăтартакан, халăх демократи çĕршывĕсем улшăнса çĕнелнине, вăйланнине тата капитализмла çĕршывсенче экономика аталанăвĕ мĕнле пулса пынине кăтартакан иллюстрацисемпе, схемăсемпе, таблицăсемпе анлăн усă куратăп. Çав вăхăтрах «Гигант» колхоз епле çĕнелсе тĕреклённине, унăн культурăллă шайĕ ӳссе çĕкленнине кăтартакан схемăсемпе, таблицăсемпе те анлăн усă куратăп. Схемăсемпе таблицăсене туса хатĕрлес ĕçре пулăшма ку ĕçе пултаракан коммунистсемпе комсомолецсене хутшăнтаратăп.

Эпĕ кăтартакан пособисем яланах вĕренекенсен шухăшĕсене çĕклеме, вĕсен активлăхне ӳстерме пулăшаççĕ.

Занятисенче вĕренмелли материалпа çеç мар, илемлĕ литературăпа та анлăн усă куратпăр. Вĕренекен материалпа çыхăнтарса, илемлĕ литература произведенийĕсен уйрăм пайĕсене вуласа паратăп. Заняти вăхăтĕнче кун пек кĕнекесене нумай вулама май çук. Çавăнпа та эпĕ вĕренекенсене килте ытларах вулама хушатăп. Мĕнле кĕнекесене вуласа тухмалли çинчен каласа кăтартатăп. Анчах кĕнеке ячĕсене каланипе çеç чарăнса тăмастăп, кĕнеке мĕн çинчен каланине, вăл вулакансемшĕн мĕнпе уйрăмах хаклă пулни çинчен тĕплĕн каласа ăнлантаратăп. Çапла туни вĕренекенсене художествăллă произведенисене вулама, вĕсене [illegible]ратма пулăшать.

[illegible] кружокра вĕренекенсем илемлĕ литература произведенисене питĕ юратса вулаççĕ, вĕсем тăрăх хăйсен пĕлĕвĕсене ӳстереççĕ, çирĕплетсе хăвараççĕ. Сталин съездра каланă сăмаха вĕреннĕ чухне вĕренекенсем «Поджигатели», «Заговорщики», «Югославская трагедия» тата ытти чылай произведенисене вуласа тухрĕç. Пирĕн çĕршывăн вăрçă хыççăнхи ӳсĕмĕсем çинчен, халăх демократи çĕршывĕсем епле хăвăрт аталанни çинчен вĕреннĕ чухне совет писателĕсем çырнă чи лайăх произведенисене питĕ нумай вуласа тухрĕç, çавăнпа пĕрлех халăх демократи çĕршывĕсенчи писательсем çырнă произведенисене те, вырăсла куçарнисене, чылай вуларĕç.

Кунсăр пуçне вĕренекен материала çирĕплетме пĕрле пуçтарăнса радио итлессине те тăтăшах йĕркелетпĕр, колхоз клубĕнче кăтартакан кинокартинăсене ушкăнпа куратпăр. Вĕсен пĕлтерĕшĕ çинчен калаçусем ирттеретпĕр. Эпир курнă «Падение Берлина», «Сталинградская битва», «Кубанские казаки», «Встреча на Эльбе» тата ытти нумай кинокартинăсем вĕренекенсене питĕ нумай пулăшрĕç.

Материала тĕплĕн ăнланма колхозра ирттерекен докладсемпе лекцисем нумай пулăшаççĕ. Вĕсем материала тата та çирĕпрех, тарăнрах ăнланса илме май параççĕ. Çавăнпа та ĕнтĕ эпир колхозри лекторсен ушкăнĕн ĕçне вăйлатассишĕн çине тăрса ĕçлетпĕр. Колхозра тăтăшах тĕрлĕ темăсем тăрăх лекцисемпе докладсем ирттеретпĕр, ку ĕçе учительсене, агрономсене, врачсене, çавăн пекех ялхуçалăхпа выльăх-чĕрлĕх ĕрчетес ĕçĕн мастерĕсене те хутшăнтаратпăр.

Занятисене лайăх ирттересси пропагандист хăйĕн пĕлĕвне тăтăшах ӳстерсе пынинчен, марксизм-ленинизм теорийĕпе хĕçпăшалланса пынинчен нумай килет. Çавăнпа та эпĕ çак ĕçе нумай вăй хуратăп, Маркс—Энгельс—Ленин—Сталин произведенийĕсене вĕренетĕп. Парти райкомĕ çумĕнче яланах ĕçлекен семинарăн занятийĕсене тăтăшах çӳретĕп. Унта лекцисем итлетĕп, пропагандистсен опычĕсемпе паллашатăп, çавăнпа пĕрлех хамăн ĕç опычĕ çинчен те каласа паратăп.

И. ЕВГЕНЬЕВ,
«Гигант» колхозри пуçламăш парторганизаци çумĕнчи политкружок руководителĕ.
Комсомольски районĕ.

Обществăн материальнăй тата культурăллă ыйтăвĕсене чи туллин тивĕçтерсе пырасси — социализмăн экономикăлла тĕп законĕ

Кооперации работникĕсен социализмла ăмăртăвĕ

МУРКАШ. Шаптак ялповĕнче ĕçлекенсем суту-илĕве вăйлатасси çинчен сўтсе явăç, кăçалхи тавар çаврăнăшĕн планне 105 процент тултарма, халăха планран ирттерсе 130 пин тенкĕлĕх тавар сутма, кашни магазинпа ларек плана тултарса пымалла тума, суту-илĕве аванлатас енĕпе тата ытти чылай ĕçсене пурнăçлама сăмах пачĕç.

Çак пaха пуçару районти суту-илў работникĕсем хушшинче анлă сарăлчĕ. Вĕсем, социализмла ăмăртăва хутшăнса, хăйсем çине çĕнĕ обязательствăсем илчĕç. Халĕ вĕсем хăйсен сăмахне чыслăн пурнăçлассишĕн, суту-илў ĕçне лайăхлатассишĕн, ĕçсыннисен ыйтăвĕсене тулнрех тивĕçтерессишĕн тăрăшса ĕçлеççĕ.

Райпотребсоюз, пĕтĕмĕшпе илсен, кăçалхи пĕрремĕш кварталти тавар çаврăнăшĕн планне мартăн 30-мĕшĕ тĕлне тултарчĕ. Социализмла ăмăртура Тивĕшпе Пўçкасси ялповĕсем малта пыраççĕ. Вĕсем хăйсен планĕсене уйăхран уйăха тултараççĕ, пĕрремĕш кварталти плансене те ăнăçлă пурнăçларĕç.

Социализмла ăмăртура уйрăм магазинсемпе ларексенчи работниксем аван тĕслĕхсем кăтартаççĕ. Район центрĕнчи апат-çимĕç магазинĕн заведующийĕ М. Ракчеев юлташ çулталăкри тавар сутмалли плана ноябрĕн 7-мĕшĕ тĕлне тултарма пулнă. Вăл хăйĕн сăмахне çирĕп тытать. Магазин квартал планне срокчен тултарчĕ, кăçалхи пĕрремĕш кварталта иртнĕ çулхи тăваттăмĕш кварталтинчен 30 пин тенкĕлĕх нумайрах апат-çимĕç сутрĕ.

Райпотребсоюзăн Муркашри магазинĕ (заведующийĕ А. Слашманов юлташ) иртнĕ çулхи тăваттăмĕш кварталта аван ĕçленĕшĕн Чăвашпотребсоюз правленийĕпе потребкооперации работникĕсен профсоюз обкомĕн куçса çўрекен Хĕрлĕ ялавне илме тивĕçлĕ пулнă. Магазин кăçалхи пĕрремĕш кварталта та çак хиспе тивĕçлĕ пулса ĕçлерĕ, таварсем сутмалли плана ăнăçлă тултарса пычĕ.

Социализмла ăмăртăва пуçаракан Шаптак ялповĕн Муркашри лавккинче ĕçлекен продавщица Н. Гордеева юлташ хăйĕн обязательствисене чыслăн пурнăçласа пырать. Вăл квартал планне чылай ирттерсе тултарчĕ. Гордеева юлташ тавар илме пыракансен ыйтăвĕсене яланах кирлĕ пек тивĕçтерме тăрăшать. Çавăн пекех çак ялпон Тойкилтĕри тата Хурăнуйĕнчи ларекĕсенче ĕçлекен продавщицăсем А. Селивестровăпа М. Сорокина юлташсем квартал планне мартăн 28-мĕшне 100—110 процент тултарчĕç. Шурча ялповĕн пĕрремĕш магазинĕн заведующийĕ И. Петров юлташ та квартал планне 110 процент ытла тултарчĕ.

Социализмла ăмăртса ĕçлесе, ĕçсыннисен ыйтăвĕсене вăхăтра тата кирлĕ пек тивĕçтерес тесе, районти ытти магазинсемпе ларексенче ĕçлекенсем те хăйсен ĕçĕсене лайăхлатса пыраççĕ.

Кăçалхи пĕрремĕш кварталта, пĕлтĕрхи тăваттăмĕш кварталтипе танлаштарсан, кулленхи кирлĕ хуçалăхпа культура таварĕсене пиншер тенкĕлĕх ытларах кўрсе килсе сутнă. Ялпосем халĕ колхозниксене çуракинче кирлĕ таварсем кўрсе килме тăрăшаççĕ, машинăсене сĕрмелли çу, урапа маçĕ, кĕреçе, кĕрепле, краççын, супăнь, тăвар тата ытти таварсем нумай кўрсе килчĕç. Иккĕмĕш кварталта района пĕрремĕш кварталтинчен 170 пин тенкĕлĕх ытларах тавар кўрсе килме палăртнă.

Çав вăхăтрах хăшпĕр ялпосен, магазинсемпе ларексен ĕçĕнче çитменлĕхсем те сахал мар-ха. Çав çитменлĕхсене хăвăртрах пĕтерни, суту-илў ĕçне вăйлатни ĕçсыннисен ыйтăвĕсене лайăхрах тивĕçтерме май парĕ.

Н. ПУШКИН.

„Роскультторг“ магазинĕнче

«Роскультторгăн» Шупашкарти магазинĕнче ĕçсыннисене кулленхи кирлĕ культура таварĕсем сутаççĕ. Кунта кашни кунах халăх нумай пулать. Хулари ĕçсыннисем кăна мар, Шупашкара килсен кашни колхозникпа колхозница, ялти интеллигентсем те кунта кĕрсе тухмасăр каймаççĕ. Кашниех хăйне кирлĕ культура таварĕсем туянма тăрăшать.

— Мана патефонпа пĕрле Совет Союзĕнчи халăхсен юрри-кĕввисене çырнă пластинкăсене суйласа парăр, — ыйтать пĕри.

— Манăн «Урал» радиоприемник туянасчĕ, хăçан пулать-ши? — ыйтать тепри.

— Питĕ нумай ыйтаççĕ. Пĕрне — «Урал», теприне—«Балтика», хăшне тата «Кама» е «Латвия» радиоприемник кирлĕ. «Тула» тата «Москвич» маркăллă приемниксем ыйтакансем те питĕ нумай. Паян тесен паян 500 приемник кирлĕ. Çитес вăхăтрах илсе килетпĕр,— каласа парать магазин директорĕ Кузьмин юлташ.

Магазин 1948 çулта ĕçлеме пуçланă. Çав вăхăтранпа вăл вуншар миллион тенкĕлĕх культура таварĕсем сутнă. Культура таварĕсен хакĕ çулсеренех йўнелсе пырать. Магазин таварсем сутасси çултан-çул ўсет. 1951 çулта магазин пурĕ 2.867.000 тенкĕлĕх тавар сутнă пулсан, 1952 çулта 3.365.000 тенкĕлĕх сутнă.

— Эсир ĕçсыннисем мĕнле таварсем ытларах туяннине пăхăр,— тет магазин директорĕ.— Иртнĕ çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа эпир тĕрлĕ мотоциклсем 35 сутрăмăр. Вăл шутра «ИЖ-49» маркăллă мотоциклсем 20.

Ĕçсыннисен культурăллă шайĕ хăвăрт ўссе пыни вĕсем культура таварĕсем нумай туяннинчен те аван курăнать. «Роскультторг» магазинĕ юлашки çулталăк хушшинче кăна патефон пластинкисем 7.500 штук, 108 патефон, баянсемпе аккордеонсем 87, тĕрлĕ йышши радиоприемниксем 232, велосипедсем 400 ытла, «ФЭД», «Киев», «Москва» тата ытти тĕрлĕ фотоаппаратсем 140 сутнă.

Шупашкар. Пир-авăр комбиначĕ тăвакансем пурăнакан поселокри 42-мĕш номерлĕ магазинта. 1952 çулта уçăлнă çак магазин çĕнĕ чул çуртра вырнаçнă. Магазинта ĕçлекенсен коллективĕ тавар çаврăнăш планне кашни уйăхрах тултарса пырать.

УКЕРЧĔК ÇИНЧЕ: кондитерски отделенин продавщици Юлия Анисимова (сылтăмри) Н. Васильевăна тавар парать. Т. ЗИНЬКОВ фотоўкерчĕкĕ.

Пурăнмашкăн пурнăç тулăх

Ворошилов урамĕнчи 40-мĕш номерлĕ икĕ хутлă йывăç çурт. Ку çуртра Шупашкарти пир-авăр фабрикинче ĕçлекен рабочисем пурăнаççĕ.

1-мĕш номерлĕ хваттер. Эпир вăл хваттере пырса кĕнĕ чухне Михаил Никифорович Свищев юлташ сĕтел хушшинче çырса ларатчĕ.

— Г. М. Маленков юлташ партин XIX-мĕш съездĕнче тунă доклад тăрăх черетлĕ политзанятие хатĕрленетĕп,— терĕ вăл, çемçе диван çине ларма сĕнсе. — Ĕç кунĕ хыççăн хамăн политикăлла пĕлĕве ўстерме тăрăшатăп. Маленков юлташ хăйĕн докладĕнче пирĕн Тăвăн çĕршывăн шалти тата тулашри политикине, Совет çĕршывĕ пĕтĕм тĕнчери мир тĕрекĕ пулнине питех те тĕрĕс кăтартса панă.

Свищев юлташ СССР Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ апатçимĕçпе промышленность таварĕсен хакне çĕнĕрен йўнетесси çинчен йышăннă постановлени пирки çапла каласа пачĕ.

— Партипе правительство таварсен хакне улттăмĕш хут йўнетрĕç. Совет халăхĕ пуян та культурăллă пурăнать. Таварсен хакне çĕнĕрен йўнетни ĕçсыннисен пурнăçне тата та лайăхлатать. Паянхи пурнăç лайăх, ыранхи тата лайăхрах пулать. Свищев юлташ Шупашкарти пир-авăр фабрикинче 1948 çултанпа ĕçлет. Малтан вăл ученик пулса ĕçленĕ. Хастарлă рабочи кăткăс машинăсене часах вĕренсе çитнĕ. Халĕ вăл—пир-авăр цехĕнчи мастер помощникĕ. Сменăри ĕç нормине кулленех 120—125 процент тултарса пырать. Ăна фабрика дирекцийĕ темиçе хутчен те преми панă, стахановла ĕçшĕн тав тунă. Стахановец уйăхне вăтам шутпа 1.500 тенкĕ ĕçлесе илет. Свищевăн арăмĕ—Аполинария Степановна фабрикăра 1946 çултанпа ткачиха пулса ĕçлет. Вăл—фабрикăри паллă стахановкăсенчен пĕри, 6 станок çинче ĕçлет. Ĕç нормине 125—130 процент тултарасси стахановкăн йăлине кĕнĕ.

Свищевсен хваттерне пырса кĕме кăмăллă. Çутă та аслă хваттер. Урайне коверсем сарса тухнă, стенасем çинче — картинăсем. Хваттерте чечексем нумай. Иртнĕ çулта çемье çĕвĕ çĕлемелли машина, комод, пысăк шкаф, диван туяннă. Свищев çĕнĕ пальто, костюм çĕлеттернĕ, арăмĕ те çĕнĕ пальто тата ытти япаласем туяннă.

— Пурте çителĕклĕ,—тет М. Свищев,—пирĕн пурнăç тулăх. Иртнĕ çулта таварсен хакне йўнетнĕ май эпир темиçе çĕр тенкĕ укçа-тенкĕ перекетлерĕмĕр. Таварсен хакне тепĕр хут, улттăмĕш хут йўнетни пирĕн пурнăçа тата ытларах лайăхлатса чечеклентересси каламасăрах паллă.

А. ЖИРНОВ.

Продавец тăрăшнипе

ЧКАЛОВСКИ. Çĕнĕ Ахпўртри магазинта А. Мартышкин юлташ кăçалхипе пиллĕкмĕш çул продавец пулса ĕçлет. Вăл хăйĕн ĕçне юратса тата тăрăшса туса пырать.

Пирĕн партипе правительство вăрçă хыççăн тавар хакĕсене ултă хут йўнетрĕç. Ĕçсыннисен магазинтан тавар илсе пултарулăхĕ çулсерен ўссе пырать. Продавец А. Мартышкин юлташ магазина ĕçсыннисем валли хуçалăхра кулленхи кирлĕ таварсем çителĕклĕ илсе килет. Вăл магазина яланах вăхăтра уçать, çынсене ăшă кăмăлпа кĕтсе илет, ялти халăха мĕнле таварсем кирлине ыйтса пĕлет. Кирлĕ тавара вăхăтра илсе килме тăрăшать.

А. Мартышкин юлташ 1952 çулта тавар сутмалли плана 112 процент, пай укçи пухмалли плана 106 процент, ĕçсыннисене кооператив членне кĕртмелли плана 100 процент тултарнă.

С. АТНЯРОВ.

Халăха таварсем сутас ĕçе лайăхлатмалла

(Редакцие килнĕ çырусем тăрăх)

Пирĕн çĕршывра государствăпа кооперации суту-илĕвĕнче тавар çаврăнăшĕ çултан-çул вăйланса пырать. Магазинсемпе ларексен, столовăйсемпе чайнăйсен шучĕ нумайланать, таварсен ассортиментĕ пуянланать. Çавна май ĕçсыннисен кулленхи ўссе пыракан ыйтăвĕсене тивĕçтересси те лайăхланать. Суту-илў предприятийĕсем иртнĕ çулта 1951 çулхинчен нумайрах таварсем сутрĕç. Кăçалхи пĕрремĕш кварталта суту-илў тата ăнăçлăрах пулса пырать.

Иртнĕ çулта тавар çаврăнăшĕн планне пирĕн республикăри Шăмăршă районĕнчи потребительсен обществи тата Елчĕк райпотребсоюзĕ лайăх тултарчĕç. Çакă вĕсен руководителĕсем çаврăнăçуллă ĕçленинчен килчĕ.

Шăмăршă райповĕ магазинсемпе ларексене таварсем вăхăтра кўрсе килнĕ. Çавăнпа та халăха кирлĕ таварсем суту-илў предприятийĕсенче çителĕклĕ пулнă. Ку районти нумай магазинсемпе ларексенче суту-илў ĕçне юратакан продавецсем ĕçлеççĕ. Вĕсем хушшинче социализмла ăмăрту анлă сарăлнă. Елчĕк районĕнчи потребительсен кооперацийĕн работникĕсем те тимлĕ ĕçлеççĕ. Вĕсем республикăри малтан суту-илў работникĕсен социализмла ăмăртăвне пуçарчĕç.

Юлашки çулсенче пирĕн республикăра пĕчĕк ялпосене нумайăшне пĕрлештерчĕç. Çавна май ялпосем хуçалăхпа укçа-тенкĕ тĕлĕшĕнчен чылай тĕрекленчĕç.

Икĕ çул каялла Калинино районĕнче пилĕк ялпо пулнă. Вĕсем кашни харпăр хăй тĕллĕн суту-илў тунă. Хăшпĕр ялпосем укçа-тенкĕ тĕлĕшĕнчен вăйсăр пулнă пирки суту-илĕве анлă сарайман, уйрăм ялсенчи лавккасем хупă тăнă. Вĕсен тавар çаврăнăшĕн планĕсем тулса пыман, растрата тăвакансем пулнă. Районти суту-илĕве вăйлатас шутпа райсовет исполкомĕ ялпосене пĕрлештерсе, районта икĕ ялпо — Калинино тата Сăкăт ялповĕсем тунă. Кун хыççăн районта суту-илў ĕçĕ палăрмаллах лайăхланнă. Район центрĕнче апат-çимĕç тата промышленность таварĕсем сутакан çĕнĕ магазинсем уçнă, районти апат-çимĕç комбиначĕ сăрапа квас сутмалли ларек тунă. Иртнĕ çулта Калининăра чайнăй лартнă, раймаг суртне юсаса илемлетнĕ. Юлашки вăхăтра ялсенчи лавккасенче те суту-илў вăйланнă.

Анчах суту-илў организацийĕсен ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пур-ха. Республикăри торг уйрăмĕсемпе ялпосенчен чылайăшĕ тавар çаврăнăшĕн планĕсене тултараймаççĕ. Магазинсенче, столовăйсемпе чайнăйсенче çитменлĕхсем нумай. Ĕçри çитменлĕхсене пĕтерме хăшпĕр çĕрте вырăнти партипе совет организацийĕсем тата суту-илў предприятийĕсен руководителĕсем çителĕклĕ тăрăшмаççĕ.

Чурачăк районĕнчи потребительсен обществин ĕçри çитменлĕхĕсем çинчен пĕлтерсе, И. Павлов корреспондент çапла çырать:

Пĕрлешсе пысăкланнă «Мотор» тата «Герой» колхозсенче районти потребительсен обществин магазинĕсем пур. Çак магазинсене ĕçсыннисем валли кирлĕ таварсем кўрсе килме Чурачăк райповĕн правленийĕ сахал тăрăшать. Ача-пăча тумтирĕсем, савăт-сапа, умывальниксем кўрсе килмеççĕ. Магазинсенче хăшпĕр чухне тăвар та пулмасть. Çав вăхăтрах магазинтан ултă километрта — Трак разъездĕнче тăвар нумай купаланса выртать. Тăвар купи çине пăравусран тухакан çĕр кăмрăкĕ вĕçсе тулать. Анчах райпо правленийĕ çав тăвара райпо магазинĕсемпе лавккисене турттарас ĕçе организацилемест.

Чкаловски районĕнчи суту-илў организацийĕсем мĕнле ĕçлени çинчен çырса, И. Матросов юлташ иртнĕ çулта Патăръелĕнче культура таварĕсен магазинĕ, апатçимĕç магазинĕ уçни, кăçалхи январь уйăхĕнче инвалидсен «Гвардия» промысла артелĕ çумĕнче магазин уçни çинчен пĕлтерет. Çавăнпа пĕрлех вăл суту-илў ĕçĕнчи çитменлĕхсене палăртать.

Район центрĕнчи магазинсенчен чылайăшĕ халăх ыйтăвĕсене тивĕçтерсе пымаççĕ,—тесе çырать вăл.—Культура таварĕсен магазинĕ сайра-хутра çеç уçă пулать. Магазинра сивĕ, таса мар. Сентресем çинче 3—4 çул каялла кăларнă кĕнекесем ытларах, çĕнĕ кĕнекесем сахал. Политикăллă литературăпа ялхуçалăх литератури хунă сентресем патне пыма çук, çав сентресем умĕнче пушă ещĕксем купаласа лартнă. Магазинра кулленхи кирлĕ таварсем çителĕксĕр. Районти ĕçсыннисем радиоприемниксем туянасшăн, анчах вĕсене кунта сайра-хутра тата пĕрер-икшер кăна илсе килеççĕ.

Апат-çимĕç сутмалли магазин та йĕркеллĕ ĕçлемест. Унта халăха кирлĕ таварсем час-часах пулмаççĕ. Магазин продавецĕ магазина тавар вăхăтра илсе пыма тăрăшмасть. Çавăн пекех чайнăйра та пысăк çитменлĕхсем пур.

Çапла вара корреспондентсем янă çырусенчен чылай районсенче суту-илў лайăхланса пыни, çав вăхăтрах хăшпĕр суту-илў организацийĕсен ĕçĕнче пысăк çитменлĕхсем пурри курăнать. Çав çитменлĕхсене кĕске вăхăт хушшинче пĕтермелле, халăха таварсем сутас ĕçе лайăхлатмалла.

Тавар хакĕсене çĕнĕрен йўнетни

ССР Союзĕн Министрĕсен Совечĕпе КПСС Центральнăй Комитечĕ апат-çимĕçпе промышленность таварĕсен ваккăн сутмалли хакĕсене 1953 çулхи апрелĕн 1-мĕшĕнчен çĕнĕрен — черечĕпе улттăмĕш хут—йўнетме постановлени йышăнчĕç. Çак постановление совет халăхĕ тулли кăмăлпа хавасланса тата Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕпе Правительствăна чун-чĕререн тав туса кĕтсе илчĕ.

Аслă учитель Иосиф Виссарионович Сталин «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă генилле произведенире çакна кăтартса панă: ку чухнехи капитализмăн экономикăлла тĕп законĕ капиталистсем хăйсем чи пысăк услам илмелле тăвассинче пулать пулсан, социализм экономикин тĕп законĕн чи паллă уйрăмлăхĕсемпе вăл хушнисем социализмла производствăна çўлте тăракан техника никĕсĕ çинче вĕçĕмсĕр ўстерсе тата лайăхлатса, пĕтĕм обществăн пĕрмаях ўссе пыракан материальнăй тата культурăллă ыйтăвĕсене чи туллин тивĕçтерсе пырасси пулать. Социализм экономикин çак тĕп законĕн пурнăçри питех те пысăк вăйĕ пирĕн çĕршывра халăха кулленхи кирлĕ япаласен хакĕсене çулсерен йўнетсе пынинче яр-уççăн палăрса тăрать.

1947—1952 çулсем хушшинче государствăн апат-çимĕçпе промышленность таварĕсене ваккăн сутмалли хакĕсене пилĕк хут йўнетнинчен Совет Союзĕнчи халăх 328 миллиард тенкĕ ытла усă илчĕ, 1952 çулта вара таварсен хакĕсем, 1947 çулхи тăваттăмĕш кварталтипе танлаштарсан, вăтам шутпа илсен, икĕ хута яхăн йўнелчĕç. Чăваш республикинчи халăхăн материальнăй пурнăçĕ лайăхланса тата культури ўссе пыни сутуилў организацийĕсем 1952 çулта кĕнекесем, радиоприемниксем, радиорепродукторсем, мотоциклсем, велосипедсем, сехетсем, коверсем, спорт хатĕрĕсем, килте кирлĕ тата культурлăха ўстерме пулăшакан ытти таварсем унчченхинчен чылай ытларах сутнинче палăрса тăрать.

Коммунистсен партийĕпе Совет правительстви халăх пурнăçне лайăхлатассишĕн, унăн материальнăй тата культурăллă ыйтăвĕсене пĕтĕмпех тивĕçтерессишĕн яланах çине тăрса тăрăшни таварсен ваккăн сутмалли хакĕсене çĕнĕрен—черечĕпе улттăмĕш хут—йўнетнинчен яруççăн курăнать. Апат-çимĕçпе промышленность таварĕсен хакне йўнетнипе пуласовет çыннисем государствăн ваккăн тăвакан суту-илĕвĕ енĕпе пысăк усă илеççĕ. Кунсăр пуçне, государство суту-илĕвĕнче таварсен хакĕсене йўнетнĕ май колхозпа кооперации суту-илĕвĕнче те таварсен хакĕ йўнелет, çавăнтан та халăха пысăк усă пулать.

Таварсен хакĕсене йўнетни совет тенкине тата ытларах çирĕплетет, унпа таварсем нумайрах туянма май килет. Çапла вара рабочисемпе служащисен реальнăй ĕç укçийĕ ўсет, колхоз хресченĕсене те чылай усă пулать, стипенди тата пенси илнипе пурăнакансен материальнăй пурнăçĕ лайăхланать.

Кăçал нумай таварсен хакĕсене йўнетме йышăннă. Хакĕ йўнелнĕ таварсем, 1952 çулта йўнетнĕ таварсен шучĕпе танлаштарсан, чылай нумайрах. Апатçимĕç таварĕсен: çăкăр, булкăсемпе сушка, сахăр, пулă, аш-какай, сĕт-çу, тĕрлĕ эрехсен, чей хакĕсене, çавăнпа пĕрлех тата промышленность таварĕсен: супăнь, пир-авăр, тумтир, çыхнă кĕпе-тумтир, галантерея япалисен, атă-пушмак, мотоцикл, велосипед, сĕтел-пукан тата ытти таварсен хакĕсене чылай йўнетнĕ. Кăçал тата аптека таварĕсен хакне те йўнетмелле тунă.

Халăха кулленхи кирлĕ таварсен хакĕсене çултан-çул йўнетсе пырас политикăна пурнăçласа пынинчен хуçалăхăн социализмла системи хуçалăхăн капитализмла системинчен нумай малта тăни питех те лайăх курăнса тăрать. Монополилле капитализм яланах капиталистла чи пысăк услам илме хытă хапсăнса, ĕçсыннисен пурнăçне начарлатса пырать, вĕсене асаплă та хĕн-хурлă пурнăçа, çуклăха тăратса хăварать, чуралла ĕçлеттерет, юнлă вăрçăсем пуçарать. Капитализмла çĕршывсенче ĕççĕр тăрса юлнă çынсен шучĕ ўссе пырать. Çав çĕршывсенче производствăна аталантарас ĕçре капиталистла чи пысăк услам илмелле тăвас интереса çеç асра тытаççĕ, çавăн пирки производство шайĕпе халăхăн таварсем туянас пултарулăхĕн шайĕ хушшинчи хирĕçўсем питех те пысăк, производство кризисĕсем питех те тарăнланса пынипе çав хирĕçўсем ытларах та ытларах çивĕчленеççĕ.

Капитализмла çĕршывсенче пĕтĕм экономикăна миллиардерсемпе миллионерсен вĕçĕмсĕр пуйма хапсăнас интересĕсемпе пăхăнтараççĕ, çав çĕршывсенче, таварсен хакĕсем ан йўнелччĕр тесе, пухăннă тавар запасĕсене юриех пĕтереççĕ. Иккĕмĕш тĕнче вăрçи хыççăн капитализмла çĕршывсенче, çав шутра США-па Англире те, халăха кулленхи кирлĕ таварсен хакĕсем пачах йўнелмен, çултан-çул хакланса пынă.

Социализмла обществăра пĕтĕм производство çынна тата унăн пĕрмаях ўссе пыракан ыйтăвĕсене тивĕçтерес ĕçе пăхăнса тăрать, çавăнпа та пирĕн çĕршывра производствăпа потреблени хушшинче, производство характерĕпе ĕçлесе тунă продуктсене валеçмелли йĕрке хушшинче антагонизмла хирĕçўсем çук. Социализмла обществăра пĕтĕм производствăна халăх ыйтăвĕсене чи туллин тивĕçтерес тĕлĕшпе малалла аталантарса пыраççĕ.

Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съездĕ ССР Союзне 1951—1955 çулсенче аталантармалли пиллĕкмĕш пилĕк çуллăх план тĕлĕшпе панă директивăсенче çăмăл промышленноçпа апат-çимĕç промышленноçĕ продукци туса кăларассине 70 процентран кая мар ўстерме, вырăнти промышленноçпа промысла кооперацийĕ продукци туса кăларассине 60 процента яхăн ўстерме палăртнă. Промышленноçăн çак отраслĕсен ниĕнрен ытларах пурне те кирлĕ япаласем, килте тата хуçалăхра кирлĕ япаласем туса кăлармалла.

Промышленноçпа ялхуçалăх производстви ўссе пынă никĕс çинче пилĕкçуллăхра государствăпа кооперацин ваккăн тăвакан суту-илĕвĕн тавар çаврăнăшне 70 процента яхăн ўстермелле. 1955 çулта, 1950 çулхипе танлаштарсан, халăха чи кирлĕ таварсене сутассине çакăн чухлĕ ўстермелле: аш-какай продукчĕсем—90 процент, пулă продукчĕсем—70 процент, выльăх-чĕрлĕх çăвĕ—70 процент, ўсентăран çăвĕ—2 хут, сахăр—2 хут, тумтир—80 процент, çĕр мамăкĕ, çăм, пурçăн тата йĕтĕн пир-авăрĕ — 70 процент, атăш пушмак—80 процент, сĕтел-пукан—3 хут, велосипедсем—3,5 хут, радиоприемниксемпе телевизорсем—2 хут. Ытти таварсем сутассине те чылай ўстерме палăртнă. Çавăн пекех столовăйсенче хатĕрлекен апат-çимĕç хисепне те 80 процента яхăн ўстермелле.

Халăха таварсем сутас ĕçе лайăхлатас шутпа пирĕн республикăра çĕнĕ магазинсемпе ларексен шутне нумайлатаççĕ. Республика столицинче Шупашкарта ятарласа пир-авăрпа тумтир сутакан çĕнĕ магазин—Ростекстильшвейторг магазинĕ уçнă. Çывăх вăхăтрах Главунивермагпа Главгастроном системи енĕпе пысăк магазинсем уçма палăртнă. Кăçал республикăри торгсем, рабочи снабжени пайĕсем тата потребительсен кооперацийĕ хуласемпе ялсенче темиçе магазинпа столовăй уçаççĕ. Çăкăр яланах çителĕклĕ пĕçерсе сутмалла тума çăкăр завочĕсемпе пекарньăсене пысăклатаççĕ. Совет çыннисене тавар сутас ĕçе лайăх йĕркелесси, халăха кирлĕ таварсене çителĕклĕ сутасси, суту-илўри культурлăха ўстересси, тавар илме пыракансемпе йĕркеллĕ калаçасси, вĕсен ыйтăвĕсене тивĕçтересси — суту-илў работникĕсен пысăк задачи пулать.

Совет Союзĕнчи промышленноçпа ялхуçалăх производстви çултан-çул çĕнĕ те çĕнĕ çитĕнўсем туса пыни, ĕç тухăçлăхĕ тăтăшах ўсни, продукцин хăйне ларакан хакне йўнетни пурне те кирлĕ япаласен хакĕсене йўнетсе пыма май параççĕ.

Совет халăхĕн пурнăçĕ лайăхланса пыни наци тупăшĕ пĕрмаях ўссе пынинчен курăнать. 1940—1951 çулсем хушшинче СССР наци тупăшĕ 83 процент ўснĕ. Капитализмла çĕршывсенче наци тупăшĕн пысăк пайне эксплуататорла класем илсе тăраççĕ. ССР Союзĕнче пĕтĕм наци тупăшĕ ĕçсыннисен аллинче тăрать, ăна пĕтĕм совет обществин интересĕсене шута илсе валеçеççĕ, ĕçсыннисем хăйсен материальнăй тата культурăллă ыйтăвĕсене тивĕçтерме наци тупăшĕн тăватă пайĕнчен виçĕ пайне яхăн илсе тăраççĕ.

Партин XIX-мĕш съездĕнче тунă отчетлă докладра Г. М. Маленков юлташ çапла каларĕ: «Эпир совет халăхĕн пурнăçне лайăхлатас тата культурине ўстерес ĕçре пысăк çитĕнўсем турăмăр. Анчах эпир тунă çитĕнўсемпе лăпланса ларма пултараймастпăр. Пирĕн умра çакăн пек задача тăрать: пĕтĕм халăх хуçалăхĕ аталанса пынă никĕс çинче совет çыннисен материальнăй пурнăçĕпе культура шайне пĕрмаях ўстерсе пымалла. Пирĕн парти малашне те совет çыннисен пĕрмаях ўссе пыракан ыйтăвĕсене ытларах тивĕçтерес тесе ывăнма пĕлмесĕр тăрăшĕ, мĕншĕн тесен совет çыннин пурнăçне лайăхлатассишĕн, совет халăхĕн пурнăçне чечеклентерессишĕн тăрăшасси пирĕн партишĕн тĕп закон пулса тăрать».

Коммунистсен сăмахĕ — çирĕп сăмах пулнине, Коммунистсен партийĕн планĕсем пурнăça кĕрсе пынине таварсен хакĕсене çĕнĕрен йўнетни те çирĕплетсе кăтартать.

Халăхăн материальнăй пурнăçне лайăхлатма тата культурине ўстерме яланах хытă тăрăшнăшăн Коммунистсен партийĕпе Совет правительствине пирĕн çĕршыври халăхсем пĕтĕм чун-чĕререн тав тăваççĕ. Партипе правительство ĕçсыннисемшĕн çавăн пек тăрăшни пирĕн çĕршыври халăхсене тата тимлĕрех ĕçлеме хавхалантарать. Совет Союзĕнчи халăхсем ытларах тăрăшса ĕçлеме, çĕршыв валли нумайрах продукци туса кăларма обязательствăсем илеççĕ. Пирĕн социализмла Тăван çĕршыври ĕçсыннисем малашне те пĕтĕм вăя хурса ĕçленипе пысăкрах çитĕнўсем тăвас, Совет государствин хăватне тĕреклетсе пырас пирки нимĕн иккеленмелли те çук.

Ленинпа Сталин хушса хăварнисене яланах асра тытса, вĕсене Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе пурнăçласа, совет халăхĕ коммунизмăн кĕрешес ĕçре çĕнĕ çитĕнўсем тăвас çулпа малалла пырать.

А. МАЛЫШЕВ.

Чăваш АССР Суту-илў министрĕ.

Китайра И. В. Сталин юлташăн „ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем" ятлă произведенине вĕренеççĕ

ШАНХАЙ, мартăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Китайра И. В. Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă тениле произведенине тата Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн XIX-мĕш съездĕн материалĕсене вĕренесси ытларах та ытларах сарăлса пырать. Çак материалсене парти работникĕсемпе государство учрежденийĕсенчи работникĕсем кăна мар, ĕççыннисен анлă массисем те тăрăшса вĕренеççĕ. Хальхи вăхăтра И. В. Сталин юлташăн «ССР Союзĕнчи социализмăн экономикăлла проблемисем» ятлă произведенине, Г. М. Маленков юлташ КПСС XIX-мĕш съездĕнче тунă доклада тата КПСС XIX-мĕш съездĕн ытти материалĕсене те кирек хăш хулари библиотекăра та, ялти вулав çурчĕсемпе рабочисен клубĕсенче те тупса илме пулать.

Çак материалсене вĕренес ĕçре халăха хаçатсемпе радио пысăк пулăшу параççĕ. Хаçатсем съезд материалĕсем çинчен статьясем, вулакансен ыйтăвĕсем çине панă ответсем пичетлесе кăлараççĕ. Хĕвелтухăç Китайри тата Шанхайри радиостанцисем КПСС XIX-мĕш съездĕн материалĕсене вĕренекенсене пулăшма лекцисемпе каласусен циклне ирттернĕ. Çак ыйту тăрăх пĕтĕмпе 36 хутчен радиопередача пулнă.

Хĕвелтухăç Китайпа Шанхайри радиостанцисем пĕлтернĕ тăрăх, кăçалхи февраль уйăхĕ вĕçлениччен вĕсем радио итлекен 105 пин çынтан ушкăнпа тата пĕччен çырнă çырусем икĕ пин ытла илнĕ. Шанхай хулинчи рабочи Гоу Шу-тан хăйĕн çырăвĕнче хăй тата унăн çемйи КПСС XIX-мĕш съездĕн решенийĕсем тăрăх радиопа паракан каласусемпе лекцисене яланах итлени çинчен пĕлтерет. Çак передачăсем, тесе çырать вăл, пире Совет Союзĕн пурнăçĕпе лайăхрах паллашма тата хамăрăн çывăх вăхăтри задачăсене—социализм тата коммунизм тумалли задачăсене ăнланса илме пулăшрĕç. Эпир Совет Союзĕнчи малта пыракан опыта вĕренни хамăрăн тăван çĕршывра строительство ĕçĕшĕн мĕн тери кирлине лайăх ăнланатпăр.

Токиора И. В. Сталина асăнса ирттернĕ хурлăхлă митинг

ШАНХАЙ, мартăн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Токиори радио пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер Токио хулинче «Хигаси Хонгандзи» чиркĕвĕн çуртĕнче И. В. Сталина асăнса нумай пин çынлă хурлăхлă митинг пулса иртнĕ.

Митинга Тĕнчери Сталинла преми лауреачĕ Икуо Ояма председатель пулса ертсе пынă. «Хигаси Хонгандзи» чиркÿ алăкĕсем умне Японипе Совет Союзĕн траурлă хăюсемпе тыттарнă ялавĕсене кăларса çакнă. Хурлăхлă митинг пулнă çуртра Генералиссимус И. В. Сталин портречĕ пулнă.

Митингра Икуо Ояма тухса каланă. Хор Генералиссимус И. В. Сталина мухтакан юрăсем юрланă.

Китайри Компартин Центральнăй Комитечĕ пĕр-пĕрне ĕçре пулăшакан ушкăнсем тата ялхуçалăх производствин кооперативĕсем çинчен йышăннă постановлени

ПЕКИН, мартăн 29-мĕшĕ. (ТАСС). «Женьминьжибао» хаçат Китайри Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕ пĕр-пĕрне ĕçре пулăшакан ушкăнсем тата ялхуçалăх производствин кооперативĕсем çинчен йышăннă постановление пичетлесе кăларнă. Çак постановлени çĕр реформи ирттернĕ хыççăн Китай Халăх Республикин ялхуçалăхне малалла аталантармалли çулсене кăтартса парать.

Постановленире çапла каланă: çĕр реформи ирттернĕ хыççăн хресченсен производствăри активлăхĕ ÿсни вăл çĕршывăн халăх хуçалăхне юсаса малалла хăвăрттăн аталантарас ĕçре пысăк вырăн йышăнать, вăл Китая индустриализацилес ĕçе пулăшать.

Парти задачи, тенĕ постановленире, хресченсен анлă массисене пĕр-пĕрне ĕçре пулăшакан ушкăнсемпе ялхуçалăх производствин кооперативĕсем малта тăни çинчен ăнлантарса парасси, хресченсене уйрăм хуçалăхран коллективлă хуçалăха майĕпен ирĕклĕ йĕркепе куçарса пырасси пулать.

Постановленире хальхи вăхăтра Китай ялĕсенче пĕр-пĕрне ĕçре пулăшасси виçĕ тĕрлĕ пулнине кăтартса панă: пĕр-пĕрне ĕçре пулăшакан вăхăтлăх, сезонлă ушкăнсем; яланлăха тунă пĕр-пĕрне ĕçре пулăшакан ушкăнсем — вĕсем пĕр-пĕрне пулăшас ĕçĕн аслăрах форми пулса тăраççĕ; ялхуçалăх кооперативĕсем (хальхи вăхăтра вĕсем пĕр-пĕрне ĕçре пулăшассин аслă форми пулса тăраççĕ). Çав кооперативсенче çĕр хресченсен уйрăм харпăрлăхĕ пулса юлать, анчах ăна пĕр лаптăка пĕрлештереççĕ. Постановленире кăтартса панă тăрăх, партин хальхи вăхăтра пĕр-пĕрне ĕçре пулăшас юхăма виçĕ енĕпе ертсе пымалла: çак юхăм вăйсăр саралнă районсенче пур майсемпе те пĕр-пĕрне ĕçре пулăшассин малтанхи формине аталантарса пымалла. Пĕр-пĕрне ĕçре пулăшассин малтанхи форми ытларах аталаннă районсенче иккĕмĕш, çÿлĕрех вырăнта тăракан формăна куçса пымалла. Пĕр-пĕрне ĕçре пулăшас енĕпе пуянрах опыт туяннă тата ертсе пыракансен кадрĕсем пур районсенче виççĕмĕш формăна — ялхуçалăх кооперативĕсене аталантарса пымалла.

Постановленире хресченсене пĕр-пĕрне ĕçре пулăшакан ушкăнсемпе ялхуçалăх производствин кооперативĕсене организацилес ĕçре пулнă икĕ йăнăш çул-йĕре критикленĕ. Çак йăнăшсенчен пĕри вăл—пĕр-пĕрне пулăшассишĕн тата кооперативсем организацилессишĕн пыракан юхăм çине пассивлă пăхни, пĕр-пĕрне пулăшни тата кооперации вакă пĕччен хуçалăхран шултра, коллективлă хуçалăха майĕпен куçса пыма кирлĕ малтанхи тапхăр пулнине ăнланманни пулать. Парти хресченсен анлă массисене шăпах та ĕнтĕ пĕччен хуçалăхран коллективлă шултра хуçалăха куçарас политика тытса пырать. Тепĕр йăнăш çул-йĕр вăл—пĕр-пĕрне ĕçре пулăшакан ушкăнсемпе ялхуçалăх производствин кооперативĕсем организацилес тĕлĕшпе ытлашши васкаса ÿкни, кооперативсене ирĕклĕ йĕркепе кĕмелли принципа кирлĕ таран çирĕппĕн пăхăнса тăманни, вырăнти условисене шута илменни пулать. Çак икĕ йăнăша сивлесе, Китайри Коммунистсен партийĕн Центральнăй Комитечĕ пĕр-пĕрне пулăшассипе кооперации юхăмне вăйлатас тĕлĕшпе, хресченсене вăрлăх, удобренисем, ялхуçалăх машинисем туянма конкретлă пулăшу парас тĕлĕшпе чылай ĕçсем туса ирттерме палăртать. Çакăн пек туни вăл хресченсене пĕр-пĕрне ĕçре пулăшакан ушкăнсемпе ялхуçалăх производствин кооперативĕсене пĕрлешме пулăшать.

Постановленире çавăн пекех тата хресченсем пĕр-пĕрне ĕçре пулăшакан ушкăнсене пĕрлешнĕ хыççăн ялта ĕç вăйĕ пушанса юлассине палăртнă. Çакă ытлашши ĕç вăйне план йĕркипе промышленность предприятийĕсенче ĕçлеме ямалла.

Юлашкинчен постановленире çапла каланă: хресченсем майĕпен пĕр-пĕрне ĕçре пулăшакан ушкăнсемпе ялхуçалăх производствин кооперативĕсене кĕни малашне хресченсене социализм тата коммунизм патне илсе пыма çул уçса парать.

Польшăри рабочисен пĕрлешнĕ партийĕн Центральнăй Комитечĕн пленумĕ

ВАРШАВА, мартăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Варшавăра мартăн 28-мĕшĕнче Польшăри рабочисен пĕрлешнĕ партийĕн Центральнăй Комитечĕн VIII-мĕш пленумĕ пулса иртнĕ.

Пленума пухăннисем рабочи класпа мĕнпур прогрессивлă этемлĕхĕн генилле çулпуçĕпе учителĕн Иосиф Виссарионович Сталинăн ятне асăнса тата Чехословакири халăхсен çулпуçĕн Клемент Готвальдăн ятне асăнса пĕр минут хушши шăп пулнă.

Пленум «Сталин юлташăн вилĕмсĕр вĕрентĕвĕ—партипе наци фронтне малалла тĕреклетессишĕн кĕрешмелли хĕçпăшал» тема тăрăх Польшăри рабочисен пĕрлешнĕ партийĕн Центральнăй Комитечĕн председателĕ Болеслав Берут тунă доклада итленĕ. Пленум Берут юлташăн докладне пĕтĕм парти, пĕтĕм инстанцисен тата парти организацийĕсен ĕçĕнче руководство вырăнне шутлама йышăннă.

Пленум организацилле ыйтусем тăрăх чылай решенисем йышăннă.

София хулинче Совет Çарĕ ячĕпе монумент лартаççĕ

СОФИЯ, мартăн 28-мĕшĕ. (ТАСС). София хули варринче Русски бульварпа Толбухин тата Евлоги Георгиев бульварĕсем хушшинче Совет Çарĕ ячĕпе чаплă монумент лартаççĕ.

Çак монумент Совет Çарĕ Болгарие фашистла чуралăхран хăтарнине тата Болгари халăхĕпе Совет Союзĕ хушшинчи ĕмĕре пыракан туслăха кăтартса парать. Монумент çÿлĕшĕ 24 метр пулать.

Монумент тăвас ĕçе Болгарири паллă скульпторсем, архитекторсем, инженерсем тата художниксем хутшăнаççĕ.

Итали сеначĕ демократие хирĕçле суйлав законĕ йышăннă

РИМ, мартăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Пĕр чарăнмасăр 77 сехет хушши лару ирттернĕ хыççăн Итали сеначĕ суйлав «реформи» çинчен калакан закон проектне йышăннă. Закон проекчĕшĕн 174 сенатор сасăланă, виçĕ сенатор сасăлама тытăнса тăнă. Коммунистсемпе социалистсем сасăлама хутшăнман.

Çав закон тăрăх, суйлавра пăртак кăна ытларах сасă илнĕ партипе парти ушкăнĕсем те парламентра пĕтĕмпех ытларахăш сасă илеççĕ. Влаçра тăракан христианла-демократсен партийĕ, çĕршывра хăйĕн влиянине çухатса пырать пулсан та, çак суйлав законĕ пулăшнипе парламентра малашне те ытларах сасă илме тăрăшать.

Правительство сената çак закон проектне мĕнле те пулсан хăвăртрах йышăнма хĕтĕртнĕ.

Демократилле партисемпе прогрессивлă профсоюзсем тавра пĕтĕçсе тăракан Италири ĕççыннисем суйлав «реформи» проектне хирĕç анлă кĕрешÿ пуçарса янă. Çĕршывра пур çĕрте те демонстрацисем, митингсем, пухусем пулса иртеççĕ, çавăн пекех çак закон проектне хирĕçлесе çырнă петицисем çине алă пусаççĕ. Çакă вăл Итали халăхĕ сенат йышăннă суйлав законне татăклăн хирĕç тăни çинчен калать.

РИМ, мартăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Сенат демократие хирĕçле суйлав законĕ йышăнна пирки тарăхса, Итали халăхĕ вăйлă демонстрацисем ирттерет. Февралĕн 29-мĕшĕнче каçхине, сенатра «реформа» çинчен закон йышăнни çинчен пĕлсенех, Рим хулинчи халăх çак закона хирĕç протест пама демократилле партисен çурчĕсем патне пухăнма пуçланă.

Мартăн 29-мĕшĕнче çĕрле хула урамĕсенчи çуртсем çине тĕрлĕ манифестсемпе листовкăсем çыпăçтарса тухнă.

Милан хулинчи рабочисем пурăнакан кварталсенче мартăн 29-мĕшĕнче каçхине демонстрацисем пулса иртнĕ. Туринра, Генуяра, Флоренцире, Венецире тата Неапольре халăх митингĕсем организациленĕ.

«Аванти» хаçат Пьетро Ненни çырнă заявление пичетлесе кăларнă. Пьетро Ненни правительство парламента йышăнтарнă «реформăна» «чăн-чăн пусмăр, государствăра переворот туни пулать» тесе хак парать.

«Паэзе» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, никам майлă тăман либерал-сенатор Бергамини коммунист-сенатора — Террачинине çапла каласа панă: «Пирĕн шухăшсем урăхла, пирĕн иртнĕ пурнăç та урăхла. Анчах пире эпир тÿрĕ шухăшлă пулни пĕрлештерет. Правительство туса ирттернĕ ĕç вăл, нимĕн иккĕленмелли те çук, государство переворочĕ пулса тăрать».

ДЕМОКРАТИЕ ХИРĔÇЛЕ СУЙЛАВ ЗАКОННЕ ПРОТЕСТЛЕСЕ, ИТАЛИРЕ ПĔТĔМĔШЛЕ ЗАБАСТОВКА ПУÇЛАНĂ

РИМ, мартăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Сенат демократие хирĕçле суйлав законĕ йышăннине хирĕç протестлесе, паян ирхине 8 сехетре Италире пĕтĕмĕшле забастовка пуçланă. Забастовка пуçласси çинчен Пĕтĕм Италири ĕçлев конфедерацийĕ пĕлтернĕ. Конфедераци чĕнĕвне йышăнса, миллионшăр ĕççыннисем ĕçлеме пăрахнă, митингсене пухăннă.

«Паэзе сера» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, çĕршыври пысăк хуласенче пуринче те транспорт ĕçĕ, пĕтĕмпе тенĕ пекех, чарăнса ларнă. Чугун çул çинче ĕçлекенсем поездсене 15 минутлăха чарса лартнă. Рим хулинчи Трастевер кварталĕнчи рабочисем пысăк саспаллисемпе: «Правительство закона пăсрĕ. Забастовка тăватпăр» тесе çырса хунă.

Пиншер студентсем, лекцисем итлеме пăрахса, забастовка тăвакан рабочисем çумне хутшăннă. Милан, Турин, Неаполь хулисенче тата ытти хуласенче те рабочисемпе служащисем пурте забастовкăна хутшăннă пирки çĕршер предприятисенче ĕç чарăнса ларнă. Нумай вырăнсенче трамвай тата автобус çинче ĕçлекен рабочисем ирхине 8 сехетченех ĕçлеме пăрахнă.

Пур хуласене те полицин пысăк чаçĕсене илсе пырса тăратнă. Рим хулинчи предприятисемпе урамсене полици соединенийĕсем вырнаçса тăнă. «Унита» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, ĕнер каçхине полицейскисем «Унита» хаçата пичетлеме чарма тата ăна Тоскана, Марке, Умбри, Кампанья, Абруцци, Апули, Калабри тата Сицили облаçĕсене ярса пама чарма хăтланнă. Анчах та редакци сотрудникĕсемпе типографи работникĕсем татăклăн хирĕç тăнипе полици ĕçĕсене путлантарса лартнă.

Бирма Америка „пулăшăвне" йышăнма килĕшмен пирки

БИРМА ПРЕМЬЕР-МИНИСТРĔ ПĔЛТЕРНИ

КАРАЧИ, мартăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). «Сивил энд милитери газетт» ятлă хаçат Юнайтед пресс оф Пакистан агентствин Делири корреспонденчĕ пĕлтернине пичетлесе кăларнă. Корреспондент пĕлтернĕ тăрăх, Импал хулине (Инди) пырса çитнĕ Бирма премьер-министрĕ У Ну хаçат представителĕсене Бирма правительстви Америкăран техника тĕлĕшĕнчен тата ытти кирек мĕнле пулăшу та илме килĕшменни çинчен каласа панă.

Çак решение, тенĕ У Ну, Бирма чиккинче çапăçакан гоминдан çарĕсем Америка хĕçпăшалĕпе усă курнă пирки йышăннă.

Корейăри ĕçсем

ХАЛĂХ ÇАРĔН ГЛАВНĂЙ КОМАНДОВАНИЙĔ ПĔЛТЕРНИ

ПХЕНЬЯН, мартăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Демократилле Корея Халăх Республикин Халăх çарĕн Главнăй командованийĕ паян çапла пĕлтернĕ: иртнĕ кун хушшинче Халăх çарĕпе Китай халăх добровольцĕсен соединенийĕсем хĕвеланăçĕнчи фронтăн икĕ участокĕнче Америкăпа Англи интервенчĕсене тата Ли Сын Ман çарĕсене хирĕç артиллерирен персе çапăçнă.

Халăх çарĕн зенитнăй чаçĕсем тата тăшман самолечĕсене хирĕç кĕрешекен салтаксем паян тăшманăн 5 самолетне персе ÿкернĕ.

Америка çарĕсем Корейăра çаплах химилле хĕçпăшалпа усă кураççĕ

ПЕКИН, мартăн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Синьхуа агентствин корреспонденчĕ Корея фронтĕнчен пĕлтернĕ тăрăх, юлашки уйăх хушшинче американецсем, малтанлăха шутласа пăхнă тăрăх, Корея Халăх çарĕпе Китай халăх добровольцĕсен позицийĕсем çине химилле снарядсем 60—70 пенĕ. Американецсем, яланхи пекех, химилле снарядсене çĕрле, ытти снарядсемпе персе тăнă хушăра, персе ярасçĕ. Çак снарядсенчен чылайăшне вăйлă наркăмăшлă япаласем тултарнă. Снарядсем çурăлнă чухне куççуль юхтаракан, пăчăхтаракан тата ытти наркăмăшлă газсем тухаççĕ.

Февралĕн 26-мĕшĕнчен пуçласа мартăн 5-мĕшне çитиччен американецсем хĕвелтухăçĕнчи Муньданьюпа Кымсон хушшинчи фронтра Халăх çарĕсен позицийĕ çине виçĕ хутчен пурĕ 10 ытла химилле снаряд кăларса янă. Февралĕн 28-мĕшĕнче çĕрле американецсем Кымсонран çурçĕр-хĕвелтухăç енче 30 снаряд ытла пенĕ. Çак снарядсенчен темиçе снарядне пăчăхтаракан газсем тултарнă пулнă. Март уйăхĕнче Кымсонран кăнтăр-хĕвелтухăç енче 48 снаряд пенĕ. Вăл шутран 8 снарядне сиен кÿрекен газсем тултарнă. Снарядсем хăйсен формипе пысăкăшĕ тĕлĕшĕнчен консерв банкисем евĕрлĕ. Çĕр çине ÿксен вĕсем çурăлмаççĕ, трубкăсем витĕр сарă тĕслĕ çăра тĕтĕм кăлараççĕ.

Мартăн 16-мĕшĕнчен пуçласа 20-мĕшне çитиччен тăшман Халăх çарĕн Косонран кăнтăр-хĕвелтухăç енчи позицийĕсем çине виçĕ хутчен химилле снарядсемпе пенĕ.

Мартăн 18-мĕшĕнче тата 19-мĕшĕнче тăшман центральнăй фронтра Кымхваран çурçĕр-хĕвеланăç енче Халăх çарĕн позицийĕсем çине темиçе хутчен те химилле снарядсемпе пенĕ. Снарядсем çурăлнă чухне тĕссĕр газсем тухнă, вĕсенчен спирт тата çĕрĕк улма шăрши кĕрет.

ООН Генеральнăй Ассамблейин VII-мĕш сессийĕ

Политикăллă комитетра

НЬЮ-ЙОРК, мартăн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Политикăллă комитетăн мартăн 27-мĕшĕнчи кăнтăрлахи ларăвĕнче США хĕçпăшаллă вăйĕсем Корейăпа Китайра бактериллĕ хĕçпăшалпа усă курни çинчен тăракан ыйтăва малалла сÿтсе явнă. Кăнтăрлахи ларура Голланди, Çĕнĕ Зеланди делегачĕсем, гоминдановец тата Чехословаки представителĕ тухса каланă.

Голландипе Çĕнĕ Зеланди делегачĕсем тата гоминдановец Америка хĕçпăшаллă вăйĕсем Корейăпа Китай халăхне хирĕç бактериллĕ хĕçпăшалпа усă курни çинчен калакан ыйтупа нихăш енчен те çыхăнса тăман нумай темăсем тăрăх сăмах ваклаăнă. Çапла майпа вĕсем Политикăллă комитета Пĕрлешÿллĕ Штатсем Корейăпа Китайра бактериллĕ хĕçпăшалпа усă курни çинчен тăракан ыйтăва тивĕçлипе пăхса тухассинчен пăрса яма тăрăшнă.

Вĕсем хыççăн Чехословаки представителĕ Вавржичка тухса каланă. Чехословаки делегацийĕ, тенĕ вăл, Корейăпа Китай халăхне хирĕç бактериллĕ хĕçпăшалпа усă курни çинчен тăракан ыйтăва Пĕрлешÿллĕ Штатсем сĕнекен меслетсемпе пăхса тухма сĕннине татăклăн сирсе ярать. Америка делегацийĕ Демократилле Корея Халăх Республикипе Китай Халăх Республикин представителĕсене Америка хăй тăратнă ыйтăва сÿтсе явас ĕçе хутшăнма чĕнесси çинчен Совет Союзĕ тăратнă сĕнĕве хирĕç пулнипе, тенĕ Вавржичка, Пĕрлешÿллĕ Штатсем хăйсем Демократилле Корея Халăх Республикипе Китай Халăх Республикин гражданла халăхĕсене хирĕç этемлĕх сивлекен хĕçпăшалпа усă курни çинчен калакан фактсене тÿрĕ кăмăлпа тĕрĕслесе тухассинчен пăрăнса юлма шутланине çирĕплетсе парать. Корейăпа Китайра бактериллĕ хĕçпăшалпа усă курнăшăн айăпланине тĕрĕслесе тухасси е ыйтăва сÿтсе явасси комитетра Пĕрлешÿллĕ Штатсем хăйсемех айăплаканĕ, хăйсемех судья, хăйсемех свидетель пулса тăнă чухне мĕнле вара «никам майлă пулмасăр» сÿтсе явасси çинчен сăмах пулма пултарать. Çав вăхăтрах Китай Халăх Республикипе Демократилле Корея Халăх Республикин представителĕсене кунта хăйсен шухăшĕсем çинчен каласа пама та, сÿтсе явакан ыйту тăрăх тивĕçлĕ фактсем тăратма та май памаççĕ. Ку вăл ыйтăва никам майлă пулмасăр тĕрĕслесе тухни мар, комеди кăна пулать, тенĕ Чехословаки делегачĕ.

Америка делегацийĕ, тенĕ Чехословаки представителĕ, çакăн пек пурте йышăннă меслетсене хирĕç Генеральнăй Ассамблейăра та, унăн комитечĕсенче те, Хăрушсăрлăх Советĕнче те пĕр хут çеç хирĕç тăмасть. Иртнĕ çулхи июль уйăхĕнче çак ыйтăва Хăрушсăрлăх Советĕнче сÿтсе явнă чухне США делегацийĕ унăн майлă тăракан делегатсем Китай Халăх Республикипе Демократилле Корея Халăх Республикин представителĕсене хăйсен шухăшĕсем çинчен тата Америкăн хĕçпăшаллă вăйĕсем Корейăпа Китайра бактериллĕ хĕçпăшалпа усă курни çинчен каласа пама май памарĕç.

Чехословаки делегачĕ малалла Англири, Францири, Бельгири, Италири, Бразилири тата ытти хăшпĕр çĕршывсенчи паллă ученăйсем хăйсем вырăнта, Корейăпа Китайра пулса, США хĕçпăшаллă вăйĕсем бактериллĕ хĕçпăшалпа усă курнине тĕрĕслесе тухнă çынсем каласа панисене илсе кăтартнă. Вăл Çурçĕр Корея çарĕсем тыткăна илнĕ Америка летчикĕсемпе офицерĕсем каласа панисем çинчен аса илтернĕ. Çак летчиксемпе офицерсем Корейăпа Китайра бактериллĕ бомбăсем пăрахас ĕçе хăйсем хутшăнни çинчен каласа панă. Чехословаки делегачĕ çавăн пекех тата Америкăри политикăпа çар деятелĕсем мĕн каланисене илсе кăтартнă. Çавсем вĕсем США гражданла халăха массăллăн пĕтерес тĕллевпе Корейăпа Китайра бактериллĕ хĕçпăшалпа усă курнине çирĕплетсе параççĕ.

Çаксем пурте вĕсем, тенĕ Вавржичка, сирсе яма май килмен фактсем, вĕсем Пĕрлешÿллĕ Штатсем Корейăпа Китайра бактериллĕ хĕçпăшалпа усă курнине тата малашне те усă курма шутланине çирĕплетсĕ параççĕ.

США ку таранччен бактериллĕ вăрçа чарасси çинчен Женевăра 1925 çулта йышăннă протокола ратификацилеме килĕшменни те, çавăн çинчен калать ĕнтĕ. Пĕрлешÿллĕ Штатсем çак протокола йышăнасшăн мар, вĕсем малашне те бактериллĕ хĕçпăшалпа усă курма шутлаççĕ.

Чехословаки представителĕ тухса каланă хыççăн комитетăн кăнтăрлахи ларăвĕ хупăннă.

Индипе Пакистан Бирма правительствин жалоби майлă тăраççĕ

ДЕЛИ, мартăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Индири информаци бюровĕ пĕлтернĕ тăрăх, Калькутта хулинчи Дум-Дум аэродромĕнче мартăн 28-мĕшĕнче хаçат представителĕсемпе калаçнă чухне премьер-министр Неру çапла каланă: Бирма территорийĕнче гоминдан çарĕсем тăнă пирки Бирма Пĕрлешнĕ Нацисен Организацине панă жалобăна Инди хÿтĕлет, тенĕ.

Гоминдан çарĕсене хĕçпăшал тата боеприпассем тăратнă пирки панă ыйтăва ответлесе Неру çапла каланă: Бирма правительствин жалобинче кăтартнă тăрăх, гоминдан çарĕсем хĕçпăшалпа боеприпассем Тайванран Таиланд урлă илсе тăраççĕ пулмалла.

ЛОНДОН, мартăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ Карачирен пĕлтернĕ тăрăх, Пакистан ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Зафрулла-хан паян çапла пĕлтернĕ: Бирма территорийĕнче Чан Кай-ши çарĕсем тăнă пирки Бирма панă жалобăна Пакистан ООН Генеральнăй Ассамблейин сессийĕн куи йĕркине кĕртме пулăшĕ.

Бирма Америка „пулăшăвне" йышăнмасть

ЛОНДОН, мартăн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентствин корреспонденчĕ Рангунран çапла пĕлтерет: Бирма правительстви США правительствине Бирма Америкăран техника енĕпе пулăшу илме килĕшменни çинчен пĕлтернĕ. Бирма правительствин çак решенине Америкăн Рангунри посолне Себолта Бирма ют çĕршыв ĕçĕсен министрĕ Сао Кун Кио пĕлтернĕ.

Автомашинăсем çапăннă чухне Ив Фарж йывăр аманнă

ТБИЛИСИ, мартăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). «Халăхсем хушшинчи мире çирĕплетнĕшĕн» паракан тĕнчери Сталинла преми лауреачĕ, Францири обществăллă деятель Ив Фарж, унăн арăмĕ тата вĕсемпе пĕрле пулнă çынсем ларса пынă автомашина мартăн 29-мĕшĕнче каçхине Гори хулинчен Тбилиси хулине таврăннă. Вĕсен автомашини çул çинче, тĕттĕм вăхăтра, груз турттармалли автомашинăпа пырса çапăннă.

Автомашинăсем çапăннă чухне Ив Фарж йывăр аманнă. Вырăнти чи лайăх медицина работникĕсем Ив Фаржа пăхаççĕ, ăна сыватма тăрăшаççĕ. Ив Фарж арăмĕ, вĕсемпе пĕрле пулнă ытти çынсем пекех, аманман.

Ив Фарж Грузие мартăн 28-мĕшĕнче килнĕ. Вăл Грузин ССР-ĕнчи хуçалăхпа, культура строительствипе паллашма шутланă.

Ив Фарж вилнĕ

ТБИЛИСИ, мартăн 30-мĕшĕ. (ТАСС). Мартăн 30-мĕшĕнче Ив Фарж сывлăхĕ питĕ начар пулнă, вăл тăна кĕреймен.

Консилиум палăртнă тăрăх, Ив Фаржăн пуç шăмми йывăр аманнă. Чĕрепе сосудсен системи ĕçлесси пăсăлнă. Чĕрепе сосудсен системине ĕçлеттерме, сывлама пулăшмашкăн мерăсем йышăннă.

Мерăсем йышăннă пулин те, мартăн 30-мĕшĕнче 21 сехетре Ив Фарж сывлăхĕ уйрăмах йывăрланнă, вăл çĕрле вилсе кайнă.

Совет халăхĕ—вăрçа хирĕç

Китчлу доктор Дели хулине пырса çитнĕ хыççăн калани

ДЕЛИ, мартăн 29-мĕшĕ. (ТАСС). Халăхсен Мире хÿтĕлес тĕлĕшпе Венгрире пулса иртнĕ конгресне кайса килнĕ тата Совет Союзĕнче пулнă хыççăн Пĕтĕм Индири Мир Совечĕн председателĕ Китчлу доктор паян Дели хулине пырса çитнĕ. Ăна Индири Наци Конгресĕ ятлă партин членĕсем, Инди парламенчĕн депутачĕсем, çамрăксем, рабочисем, культура деятелĕсем, политикăллă партисемпе обществăллă организацисен представителĕсем кĕтсе илме тухнă. Китчлуна çавăн пекех тата Совет Союзĕн, Китайăн, Чехословакин, Венгрин Индири дипломатилле представителĕсем кĕтсе илнĕ. Перрон çинче çĕршер плакатсемпе лозунгсем пулнă. Вĕсем çине: «Эпир Корейăри вăрçа халех чарма требовани лартатпăр!», «Азиатсем азиатсене хирĕç вăрçас çук!», «Империалистсем Азире пулмалла мар!», «Мир вăрçа çĕнтерет!» тесе çырнă.

Китчлуна чечек çыххисем панă.

Перрон çинче Китчлу доктор кĕске сăмах каланă. Вăл: «Совет халăхĕ миршĕн кĕрешет, вăл вăрçа хирĕç тăрать», тенĕ.

ПОЛЬШĂРА АМЕРИКА ШПИОНĔСЕМ ПИРКИ ЙЫШĂННĂ ПРИГОВОР

ВАРШАВА, мартăн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Щецин хулинчи çар сучĕ Щецин воеводствинче тата ытти воеводствăсенче ĕçленĕ Америка разведкин агенчĕсем тĕлĕшпе приговор йышăннă.

Айăпланакан В. Борские, С. Пирог-Петкевича тата Ю. Цухальские персе вĕлермелле, Ян Пашкевича ĕмĕрлĕхе хупса лартмалла, В. Войтманпа М. Пирога 15-шер çул хушши тĕрмере хупса усрамалла тунă.

Редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

ТЕАТР

ЧĂВАШ АКАДЕМИ ТЕАТРĔНЧЕ — апрелĕн 1-мĕшĕнче чăвашла спектакль **«Виçĕ туй»**. Апрелĕн 2-мĕшĕнче вырăсла спектакль **«Ночь ошибок»**. Спектакльсем 20 сехетре пуçланаççĕ.

ÇАМРĂКСЕН ТЕАТРĔ—апрелĕн 1-мĕшĕнче **«Аттестат зрелости»**. Спектакль 20 сехетре пуçланать.

КИНО

«УДАРНИК»—апрелĕн 1-мĕшĕпе 2-мĕшĕнче **«Кардинал Ришелье»**.

Чăвашпотребсоюз системи хатĕрлев кантурĕсемпе ялпосен лавккисем урлă **çĕрулми сутăн илет.**

Çĕрулми сутакансене райпотребсоюзсемпе ялпосем строительство материалĕсем тата ытти промышленность таварĕсем сутаççĕ.

ЧĂВАШПОТРЕБСОЮЗĂН ХАТĔРЛЕВ УПРАВЛЕНИЙĔ.

ШУПАШКАРТИ ТАТА РЕСПУБЛИКĂРИ ЭКРАНСЕМ ÇИНЧЕ

„АННА КАРЕНИНА"

ятлă çĕнĕ илемлĕ фильм-спектакль кăтартма пуçлаççĕ.

«Анна Каренина» фильм-спектакль—Л. Н. Толстой романĕнчи сценăсем (драма композицине Н. Волков туса хатĕрленĕ).

Спектакле ССР Союзĕн Мускаври М. Горький ячĕпе тăракан Ленин орденлĕ тата Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденлĕ Художествăллă Академиллĕ театрĕ лартнă.

Спектакль лартаканĕсем—В. И. Немирович-Данченко, В. Г. Сахновский. Режиссĕр—П. Лесли.

Рольсене выляна: А. Тарасова, П. Массальский, В. Станицын тата ыттисем те.

Фильма Ленин орденлĕ «Мосфильм» киностудийĕ ÿкернĕ.

Экрансем çине 1953 çулта кăларнă.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редактор—0-67, редактор заместителĕ—3-99, ответлă секретарь—4-26, секретариат—3-54, промышленность пайĕ—5-74, информаци пайĕ—5-74, парти пурнăç пайĕ—3-99, ялхуçалăх пайĕ—3-97, культура пайĕ—8-61, совет строительстви пайĕ—8-61, çырусен пайĕ—7-32, издательство кантурĕ—0-23.

НТ 01054 Типографи №1 Чувашполиграфиздата. Тираж 20.000 экз.